24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 АВГУСТ 12 ЫТЛАРИКУН 188 (5903) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çаран начальство составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн **Ленин** орденĕ тата **«Золотая Звезда»** медалĕ парса, çаксене **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Капитан **Баталов** Федор Алексеевич
2. Лейтенант **Каменщиков** Владимир Григорьевич
3. Кĕçĕн лейтенант **Ридной** Степан Григорьевич.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти августăн 9-мĕш.

Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлани

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ августăн 9-мĕшĕнче кăларнă Указсемпе Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа хастарлăх кăтартнăшăн:

ЛЕНИН орденĕпе — 30 çынна,
ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 418 çынна,
«ХĔРЛĔ ÇАЛТАР» орденĕпе — 359 çынна,
«ЗА ОТВАГУ» медальпе — 203 çынна,
«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе — 95 çынна наградăланă. (ТАСС).

Мĕнпур славян халăхĕсен Мускаври митингĕ

Славян халăхĕсен представительĕсем—общество тата çар деятелĕсем, писательсемпе ученăйсем пуçарнипе августăн 10-мĕшĕнче Мускавра мĕнпур славян халăхĕсен митингĕ пулса иртнĕ. Митинга вырăс писательĕ академик Алексей Толстой уçнă.

Митингра çаксем сăмах тухса калаçнă: Польша генералĕ Янушайтис, чехсен палла ученăйĕ профессор Зденек Неедлы, Черногори поэчĕ Радуле Стиенский, Чехословаки поэчĕ профессор Ондра Лысогорский, Серби профессорĕ Божидар Маслярич, Хорватин обществăллă деятелĕ Юро Салай, словен журналисчĕ Иван Регент, болгарсен обществăллă деятелĕ доктор Стоянов, Македонин обществăллă деятелĕ Влахов.

Пур ораторсен хĕрӳ сăмахĕсенче те тăван çĕршыва тата ирĕклĕхе вĕçĕхĕррисĕр юратнин туйăмĕ, фашистла ирсĕрсене курайман таса кăмăл, хăйсен халăхĕсем умĕнче ответлă та парăмлă пулса тăнă туйăм туллин тасса тăнă. Гитлеровецсем çаратнă Варшавăра тата çунтарнă Белградра, фашистсен аттипе таптаннă, анчах пусмăрçăсене парăнман Прагăра, Братиславăра, Софире, Карпат леш енче-лĕ, Украинăри, Черногорири, Македонири ту çинчи ялсем,—славян чĕри хĕрӳлĕн тапакан вырăнта пур çĕрте те вĕсен сăмахĕсене итлессине вĕсем пĕлсе тăнă.

Гитлер пусмăрлăхне хирĕç хĕрхенӳçĕр те татăклă çапăçăва тухса пĕтĕм пĕвĕпе çĕкленекен мĕнпур славян тĕнчи хальхи вăхăтра мĕн туйса тăнине, шухăшланине тата ĕмĕтленнине çак митинг уçăн кăтартса пачĕ. Çак митинг вăл нихăçан та чурасем пулман тата пулас та çук йышлă славян халăхĕсен тăванла пĕрлĕхĕн тата вăйĕсене пĕрлештернин демонстрацийĕ пулса тăчĕ!

Мĕнпур славян халăхĕсен митингне радиопа трансляциленĕ. Августăн 11-мĕшĕнче, 19 сехетре, митинг малаллă тăсăлать. (ТАСС).

Республикăри уйăхирсенче

Малта пыракан бригада ыраш вырса пĕтернĕ

ВАРНАР, августăн 11-мĕш. Сендимеркинăри «Гигант» колхозăн иккĕмĕш бригади (бригадирĕ Тимофеев юлташ) ыраш вырса пĕтернĕ. М. Скворцова, А. Викторова, Ф. Андреева т. ыт. колхозницăсем кашни кунах ĕç нормине 200 процент тултарса ĕçлерĕç. Çамрăксемпе пĕрлех ваттисем те ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартрĕç. Сăмахран, Е. Терентьева колхозница кулленхи ĕç нормине 125 процент тултарса пычĕ. Вăл 64 çулта ĕнтĕ, унăн икĕ ывăлĕ те фронтра фашизма хирĕç çапăçаççĕ.

«Гигант» колхоз оборона фончĕ валли 2 центнер аш-какай, 800 çăмарта, 50 центнер тырă шама пулчĕ.

«Красный Сунар» колхоз обсрона фончĕ валли 2 пуç шултра выльăх, 500 çăмарта пачĕ. Колхоз председателĕ Смирнов юлташ кашни уйăхрах 5 ĕçкунне тивекен тупăша оборона фондне парать.

СЕРГЕЙ ВАНИН.

Пурте уйра ĕçлеççĕ

ЧĔРПЕÇ. Кĕлĕмкассинчи «Красный фронтовик» колхоз тырпулсене пухса кĕме лайăх хатĕрленчĕ. Ыраш вырма августăн 2-мĕшĕнче тухнă.

Тырпула чи кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртес ĕçе пур бригадăсенче те тĕрĕс организацилеиĕ, ватă стариксемпе карчăксем те, подростоксем те пурте ĕçре. Вĕсем ăнса пулнă тырпула хăвăрт пухса кĕрес туйăмпа ĕçлеççĕ.

Колхозниксем уборка пуçлансан малтанхи кунах тухăçлăн ĕçлени курăнчĕ. 3-мĕш бригадăри ватă колхозницăсенчен организацилеиĕ звено малтанхи кунах нормăна пурнăçланă. Çак звенора уйрăмăнах Е. Игнатьева, М. Иванова, А. Шемякина колхозницăсем хастарлă ĕçленине палăртса хăвармалла, вĕсем пурте 50—60 çултан иртнĕ ватă карчăксем.

Ĕçре машинăсемпе тата ытти ĕç хатĕрĕсемпе туллин усă кураççĕ. Уборкăра 6 жнейка ĕçлемелле, вĕсем пурте ĕçлеççĕ.

Звеносенче ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пырать. Августăн 4-мĕшĕнче 22,12 гектар вырнă пулсан, августăн 5-мĕшĕнче 23,38 гектар вырнă. 4-мĕш бригадăри машиноведсем Павел Бронниковпа Иван Антонов жнейкăпа тырă вырас нормăна 105—110 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Агитаторсем хăйсен ĕçне ун куçарчĕç. Вĕсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пыраççĕ. Е. Пудовкина, К. Перьева, В. Михайлова, И. Алексеев, П. Иванов учитель-агитаторсем кашни кун уйра колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулаççĕ. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче колхозниксене хаçат-журналсем вуласа, Хĕрлĕ Çаран фронтри паттăр ĕçĕсем çинчен каласа ăнлантараççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ. Районра 143 комсомолец агитаторсемпе чтецсем пулса ĕçлеççĕ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Комсомолецсем уборкăра

ÇĔРПӲ. Районри нумай колхозсем тырпула пухса кĕртме тытăнчĕç. «Новая жизнь» колхоз августăн 7-мĕшне 82 гектар, «Союз» колхоз 32 гектар тырă вырнă. Уборка ĕçĕнче уйрăмăнах комсомолецсем тăрăпса ĕçлесе, колхозниксемпе союза тăман çамрăксене примерсем кăтартаççĕ. Машиновед Картошкин юлташ хăйĕн кулленхи ĕç нормине 200—250 процент тултарать. Кĕлте сыхакансем Т. Спиридонова 125 процент, Романова 150 процент, Илюшина 130 процент, Рахчеев 125 процент тултараççĕ. Комсомолăн пуçламĕш организаци пуçарнипе колхозра ача ясли, столовăй уçнă.

«Красный флот», «Красная Повария», «Ĕмĕт», «Шурăмпуç», «Красный Октябрь» колхозсенче те комсомолецсем малти ретре пыраççĕ. Вĕсем кашни вăхăтĕнче колхозниксене хаçат-журналсем вуласа, Хĕрлĕ Çаран фронтри паттăр ĕçĕсем çинчен каласа ăнлантараççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ. Районра 143 комсомолец агитаторсемпе чтецсем пулса ĕçлеççĕ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ыран августăн 9-мĕш тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Кексгольм, Смоленск, Коростень, Белая Церковь енĕсенче тата фронтăн Эстонири участокĕнче противника хирĕç кĕрешнĕ.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче разведка тăвас ĕç пулса пынă тата вырăнти çапăçусем пулнă.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противникăн мотомехчаçĕсене, пехотине тата артиллерине пыра-пыра çапнă.

* * *

Н-ски чугунçул станцин начальникĕ Я. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕн боецĕсем нимĕçсен йывăр танкĕ патне кĕтмен çĕртен пырса тухнă, çав танкăн экипажĕ çĕмĕрĕлсе татăлнă гусеницăна юсанă пулнă. Снайпер-партизансем фашистсен салтакĕсене персе вĕлернĕ. Танк çинчен 3 пулемет тата 4 тупă илнĕ те, партизансем танк айне мина хурса ăна сирпĕтсе янă.

С. районĕнче «Красный пахарь» колхоз правленийĕн членĕ Мария Д. ертсе пыракан партизансен отрячĕ кĕрешет. Малтанхи кунсенчех отряд нумай çăлсене тултарса лартнă, чи кирлĕ кĕперсене пĕтере-пĕтере тăкнă тата нумай вырăнсенче телефон линийĕсене касса татнă. Августăн 2-мĕшĕнче отряд боецĕсем нимĕçсен связист-мотоциклистĕсене 4 çынна ярса тытнă. Тыткăна лекнисем каласа панă тăрăх, çĕрле П. хули патнелле фашистсен танксене юсама запаслă пайсем тиенĕ автоколонни каймалла пулнă, çакна пĕлнĕ те партизансем засада тунă. Ирхине ирех нимĕçсен колоннине вăрманти хĕсĕк çул çинче çарса лартнă. 8 машинине партизансем пĕтерсе тăкнă. Танксем валли тиенĕ запаслă пайсене çĕмĕрсе юрăхсăра каларнă та шурлăха пăрахнă.

* * *

НИМĔÇ ФАШИСЧĔСЕН БРЕСТРИ ТАТА МИНСКРИ ТИСКЕР ĔÇĔСЕМ

Советăн нимĕçсем туртса илнĕ хулисенчен тарса тухнă совет граждăнĕсенчен Совет Информаци Бюроне нимĕç фашисчĕсен çавтри тискер те ирсĕр ĕçĕсем çинчен питех те нумай çырусемпе заявленисем çаплах килсе тăраççĕ. Аялархра совет хулисенче Брестра тата Минскра мирлĕ халăха гитлеровецсем тискеррĕн асаплантарнине курнă çынсен показанийĕсене илсе кăтартнă.

Брестра пурăннă çын, Брест хула совечĕн пурăнмалли суртĕр комиссин членĕ Г. Я. Пестружицкая çырать: «Фашистсем малтанхи кунах совет учрежденийĕсен пур сотрудникĕсене те, обществăллă организацисен активисчĕсене, чугунçул мастерскойĕсенчи тата депори, предприятисенчи тата промысла артелĕсенчи стахановецсене арестлерĕç. Арестленисене вĕсен семьисемпе пĕрле «Спартак» стадионне хăваласа кĕртсе хупрĕç. Мана стадиона илсе пынă чухне унта ĕнтĕ пин çын пытла пулнă. Пире икĕ кун хушши уçă пĕлăт айĕнче çимеллисĕр тата çемеллисĕр тытса усрарĕç. Выçă ачасем йĕротчĕç. Арестленисем пурте курса тăнă çĕртех, нимĕç салтакĕ йĕрсе тăракан 3—4 çулсăн хĕрачана урине тапрĕ. Амăшĕ хăйĕн ачине хӳтлеме тытăннăччĕ, анчах фашист прикладпа сулса ячĕ те ăна хырăмран çапрĕ. Салтаксем ачасене тата хĕрарăмсене асаплантарнине темиçе арçын хирĕçлеме тытăнчĕç. Салтаксем вĕсене вĕлерес патне çитиех хĕнерĕç. Кашни каçах стадиона ӳсĕр фашистсем пырса кĕретчĕç те ирĕксĕрлесех çамрăк хĕрарăмсене илсе тухса каятчĕç. Икĕ каç хушшинче нимĕç салтакĕсем хĕрарăмсене 70 çынна ытла илсе тухса кайрĕç, вĕсем кайран пĕр хыпарсăрах çухалчĕç. Çав телейсĕр хĕрарăмсен упăшкисемпе тăванĕсем вĕсене хӳтлеме пăхрĕç. Фашистсем вара пистолетсене ĕçе ячĕç. Çав вăхăтра стадионра нимĕçсем 20 яхăн арçына персе вĕлерчĕç. Виççĕмĕш кунĕнче стадиона темиçе офицер пырса кĕчĕç. Офицерсенчен пĕри арестленĕ çынсене список тăрăх чĕнме пуçларĕ. Пĕтĕмпе 200 çынран кая мар чĕнсе илчĕ. Вĕсене футбол вылямалли вырăнăн çурçĕр енне строя тăратрĕç те пулеметсенчен персе вĕлерчĕç. Персе вĕлернисен ӳчĕсем стадионра виçĕ кун йăваиса выртрĕç. Çакăн хыççăн арестленĕ граждăнсем хушшинчен гестаповецсем татах 250—300 çын суйласа илчĕç те çĕрле таçта илсе тухса кайрĕç».

Сберкасса бухгалтерĕ А. А. Бутько хăйĕн çыравĕнче арестленĕ совет граждăнĕсене нимĕç войскисен штабĕнче допрос тунин питех те хăрушă картинине кăтартса парать. «Мана хулари финанс работникĕсен ушкăнĕпе пĕрле арестлерĕç. Икĕ кун хушши пире тĕрмере тытса усрарĕç. Виççĕмĕш кунĕнче допроса чĕнме пуçларĕç. Фашистсем совет учрежденисен, предприятисен тата обществăллă организацисен хаклă япалисем ăçта усранни çинчен ыйтса асаплантарчĕç. Мăн умĕн чугунçул çинче ĕçленĕ Н. В. Брудный рабочие допрос турĕç. Фашистсем ăна профсоюзсен активисчĕсен, коммунистсен, çул çинчи политотдел работникĕсен ятне калама хушрĕç. Арестленĕ рабочи ним те шарламарĕ. Палачсем ун çине ывтăнчĕç те хĕнеме пуçларĕç. Унăн икĕ аллине те хуçрĕç, прикладпа çапса пит-куçне çĕмĕрчĕç тата темиçе çĕртен штыкпа чикрĕç. Совет патриотĕнчен нимĕнле сведени те илеймен пирки, офицер ăна персе вĕлерчĕ. Фашистла çынсиенсем пĕтĕ хĕрарăма В. Л. Андрасюка нумай вăхăт хушши асаплантарчĕç. Допрос пĕтес умĕн унран: эсĕ «большевикла заема» çырăнса илтĕн-и, тесе ыйтрĕç. Вăл, çырăнса илтĕм тесе, ответленĕ хыççăн, ăна заем илме комиссарсем ирĕксĕрлесе çырăнтарчĕç тесе, заявлени çырма хушрĕç. Андрасюк çапла ответлерĕ: «Анчах вăл тĕрĕс мар-çке, эпĕ хамăн ирĕкпех çырăнса илнĕ вĕт ăна», терĕ. Çакăн хыççăн фашистсем хĕрарăмран темĕнле те мăшкăллама тата асаплантарма тытăнчĕç: çунакан перуспа тĕкĕсе питне пĕçертĕç, хачăпа унăн мăйне кăсрĕç. Андрасюк чăтса тăраймасăр çапла каларĕ: «Мĕн тăватăр эсир, чăлахсем, çынвĕлеренсем». Урса кайнă фашистсем ăна штыкпа чикисе вĕлерчĕç».

Брест хулинче пурăннă А. Зорын, В. Крывушка, Я. Морозов, В. Алесин, Г. Самосский тата М. Завĕрженец, фашистла тамăкран тарса хăтăнăскерсем, Брест хулинче нимĕçсем оккупацилеиĕ малтанхи кунсенче пин çынран кая мар персе тата гестапо тĕрмисенче асаплантарса вĕлерни çинчен пĕлтереççĕ.

* * *

Минскри Киров ячĕпе тăракан машиностроени заводĕнчи рабочи арăмĕ Любовь Федоровна Климчук хăйĕн çыравĕнче нимĕç салтакĕсем Минскра пурăннă çынсен пысăк ушкăнне тискеррĕн асаплантарни çинчен пĕлтерет, çав çынсене фашистсем Минскран 50 километрта ярса тытнă та çĕмĕрнĕ хулана каялла илсе кайнă. «Вăрманта пире фашистсен салтакĕсем ларса пыракан 12 автомашина хăваласа çитрĕç. Нимĕçсем машинăсене чарчĕç, çĕр çине анчĕç, нимĕн те каламасăрах пирĕннисене автоматсемпе винтовкăсенчен персе вĕлерме пуçларĕç. Ирсĕр бандитсен пульлисем лекнипе сахалтан та 50 çын, вăл шутра 18 ача, вилчĕ. Кун хыççăн пире çавăрса илчĕç те хулана хăваласа кайрĕç. Аманнисене илме эпир ыйтса тархаслани çине нимĕçсем штыксемпе тата прикладсемпе çапса ответлерĕç. Пирĕнтен мăшкăлласа, фашистсем чарăнса тăма та памарĕç. Юн юхнипе вăйсăрланса ӳкекенсене вара нимĕçсем штыксемпе чиксе вĕлерчĕç. Фашистла ирсĕрсем 35 çынна чиксе тата персе вĕлерчĕç. Минскран 5 километрта ман куç умĕнче пулса иртнĕ çавтри хăрушă ĕçе эпĕ нихăçан та манас çук. Нимĕçсен пульли лекнипе сураналлăнă 15 çулти ача Саша Свергун çĕр çине ӳкрĕ те тăма пултарайманрĕ. Нимĕç салтакĕ ăна прикладпа çапма тата урапа тапма тытăнчĕ. Çакă та пулăшман хыççăн, фашист штыкне сулса ячĕ. Саша амăшĕ ывăлĕ патне чупса пычĕ, хăйĕн ӳчĕпе ăна хупăрласа тăчĕ. Тискерленсе кайнă фашист вара амăшне те, ывăлне те штыкпа чиксе пăрахрĕ. Хулана çитичен эпир 150 çынна яхăн çеç юлтăмăр. Виçĕ кун хушши допрос пычĕ. Асаплантарнă пирки тата фашистсен пульлисенчен кашни кунах 20—25-шер çын вилчĕç. Тăваттăмĕш кунĕнче допрос чарăнса ларчĕ. Чĕррĕн юлнă совет граждăнĕсене 85 çынна нимĕçсем Смолевичи хулине çул çинче ĕçлеме илсе кайрĕç».

Районри библиотекăн заведующийĕ Михась Короткевич Минск хули патĕнчи нимĕçсен концентрацилле лагерĕнчен тарса тухнă, çав лагере фашистсем çул çинче ярса тытнă пур беженецсене те хăваласа пыраççĕ. Хăйĕн çыравĕнче Михась Короткевич фашистсем хӳтлĕхсĕр çынсене нихăçан курман пек асаплантарнине кăтартса парать: «Юлашки пиллĕк кун хушшинче кунта тытса хупнă шыпăр çынсемпе ачасем çимелли нимĕнле апат та илмен. Ултăмĕш кунĕнче фашистсем пире çĕрĕк селедкăсем, виçĕ çынна пĕр селедка пачĕç. Хупса лартнă пиншер çын валли фашистсем пĕр кунра пĕр пичке шыв илсе пыраççĕ. Пĕтĕм лагерĕнче те пĕр тутăхнă кружка çеç. Лагерьте чирлĕ çынсем çĕршерĕн шутланаççĕ, анчах вĕсене медицина тĕлĕппе пачах пулăшмаççĕ. Выçса вилнисен тата хĕнесе вĕлернисен ӳчĕсене эрни-эрнипе илсе каймасăр выртараççĕ. Июлĕн 21-мĕшĕнче лагерь комендантĕ еврейсен пысăк ушкăнне ирĕксĕрлесе шăтăксем чавтарчĕ. Шăтăксем хатĕр пулнă хыççăн, еврейсене çыхса хучĕç те шăтăка пăрахрĕç. Кун хыççăн фашистсем лагерьте пулнă белоруссене еврейсем çине çĕр тăкса витсе хума хушрĕç. Белоруссем пурте, пĕр çын пек пулса, комендантăн çак ытла та тискер приказне пурнăçа кĕртме килĕшмерĕç. Вара урса кайнă фашистсем 45 еврея тата 30 белоруса пулеметсенчен персе вĕлерчĕç. Кашни каçах лагерь комендантĕ список тăрăх çынсене суйласа плетчĕ те ирхине вĕсене лагерьтен 200 метрта персе вĕлеретчĕç».

Августăн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Кексгольм, Смоленск, Коростень тата Белая Церковь енĕсенче противника хирĕç хунĕпех хаярран çапăçнă.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче разведка енĕпе туса ирттернĕ çапăçусем пулнă.

Пирĕн авиаци августăн 9-мĕшĕнче противникăн çапăçу хирĕнчи мотомехчаçĕсемпе пехотине пыра-пыра çапнă тата аэродромсенче унăн авиацине атакăланă. Августăн 8-мĕшĕнче нимĕçсен 14 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 12 самолет пĕтнĕ.

Тĕрĕс шута илнĕ тăрăх, августăн 7-мĕшĕнче нимĕçсенне, кун умĕнхи сводкăра пĕлтернĕ пек, 21 самолет мар, 81 самолет пĕтерсе тăкнă.

Балти тинĕсĕнчи Хĕрлĕ ялавлă флот карапĕсем противникăнне пĕр торпеднăй катер путарнă тата иккĕшне сиенленĕ, çаван пекех тата унăн транспортчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче кĕрешекен Троценко лейтенантăн батарейи Н. местечки патĕнче нимĕç танкĕсен пысăк колоннине çĕмĕрсе тăкнă. Кĕçĕн сержантсен Токмаковна Савищенко юлташсен, орудийĕсем фашистсен машинисем çине чи малтан пеме пуçланă. Вĕсен орудийĕсенчен пенине темиçе танк çунма пуçланă. Тăшман колонни çапăçăва хатĕрленме хăтланнă, анчах пирĕн брудисенчен аркатса тăкмаллах пенипе противникăн çапăçма хатĕрленекен танкĕсене салатса янă. Совет артиллеристĕсем пенине чăтса тăрай масăр, нимĕçсем кайлла чакнă, çапăçу хирне вĕсем пирĕн артиллеристсем персе çĕмĕрнĕ. 15 танка пăрахса хăварнă. Фашистсен наступлението аркатса янă.

* * *

Пирĕн разведка С. çывăхĕнчи аэродрома противникăн 20 ытла самолет ларнине асăрханă. Новиков юлташ подразделенийĕнчи 9 бомбардировщик çĕрле аэродром патне вăрттăн пынă та, осколочнăй тата зажигательнăй бомбăсем пăрахса фашистсен 14 самолетне пĕтерсе тăкнă. Бомбардировщиксене хӳтлесе пынă истребительсен звени çĕр çумпипе аялтан вĕçсе пынă чух пулеметсенчен персе тăшманăн бомбăсенчен сыхланса юлнă самолечĕсене стройран кăларать. Августăн 7-мĕшĕнче, тăшман штабĕ ăçта вырнаçса тăнине пĕлнĕ хыççăн, партизансем çĕрле çав штаб патне вăрттăн пырса штабри офицерсене мĕнпур канцелярийĕпе пĕрле тытса илнĕ. Икĕ танк, темиçе автомашинăпа мотоцикл пĕтерсе тăкнă хыççăн, партизансем вăрмана кĕрсе пытаннă. Н. районĕнче пирĕн войскăсем Германин танковăй колонникине хупăрласа илнĕ. Фашистсен танкĕсемпе автомашинисем горючисĕр тăрса юлнă. Кăштах вăхăт иртсен снимĕçсен хупăрласа илнĕ чăрсе тăшманăн темиçе самолечĕ парашютсемпе 5 пичке бензин пăрахса панă. Анчах фашистсен летчикĕсем йăнăш туна, горючи тултарнă пичкесем илçетри уçланкăна ӳкнĕ. Е. юлташ отрядĕнчи партизансем çакна курса тăнă. Нимĕçсенчен малăрах çитсе партизансем горючине тытса илнĕ те, вăрмана шала илсе кайса пытарнă. Германи танкĕсемпе автомашинисем çине часах совет бомбардировщикĕсем вĕçсе пынă.

Районри универмаг директорĕ Ф. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ фашистсен связистне тытнă. Связистран туртса илнĕ документсем тăрăх çакна палăртнă: Хĕрлĕ Çар часĕсене флангран пырса çапас тесе, Германи çарĕн 103-мĕш пехотăй полкĕ Н-ски высота патне çывхарса пынă. Вăрмансемпе çырмасем урлă высота патне тӳрĕрен пырса, партизансем засада тунă. Засада пурри çинчен нимĕн шухăшламасăр высота патне походлă маршпа пыракан нимĕçсене аркатса тăкмаллах пенипе кĕтсе илнĕ. Пырса çитме ĕлкĕрнĕ совет войскисем, Игнатов капитан командир пулса ертсе пынипе, тăшман колоннине татăклăнах салатса янă. Çапăçу хирне нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 450 çын ытла вилсе тата аманса юлнă, 12 автомашинăна çĕмĕрсе тăкнă, 21 пулемет, çĕршер автоматсемпе винтовкăсем пăрахса хăварнă.

* * *

Тыткăна илнĕ тата хăйсем пирĕн енне тарса каçнă салтаксен документĕсене вĕсем кăтартса панисем белофинсен çарĕнчен салтаксем тарасси пĕрмаях вăйланса пынине ĕнентерсе парааççĕ. Финсен вĕлернĕ офицерĕ рота командирĕ П. Рахья çумĕнче ярса пама ĕлкĕреймен донесени тупнă, çав донесенире совет войскисене хирĕç çапăçма пуçласан малтанхи кунĕнчех ротăран 16 салтак тарни çинчен пĕлтернĕ. Штабной ротăри рядовой салтак Эркки Суйкемаа, пирĕн енне тарса каçнăскер, çапла каласа панă: «Финн салтакĕсенчен чи нумайĕшĕ ирĕксĕрленипе çеç вăрçаççĕ», тенĕ. Тăванĕсемпе пусĕсенчен илнĕ нумай çырусенче, тыткăна лекнĕ финн салтакĕсем çумĕнче тупнăскерсенче, Финляндири ĕççыннисем Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăна кăмăлсăр пулнине тата фашистла Германие тарăхса курайманнине уçăнах каласа панă. Çапла, финн хресченĕ Савукости Олави хăйĕн Нило патне фронта çапла çырать: «Эпĕ килте нумаях пурăнаймастăп пулĕ. Часах акă мана чĕнĕç те, пăшал тарса фронта хăваласа кайĕç. Анчах эпĕ хама улталамасăр. Тем тесен те Совет Союзне хирĕç вăрçмастăпах. Пурнăç тата обстоятельствăсем çак положенирен мĕнле майпа ăслăн çăлăнса тухмаллине кăтартса парасса эпĕ шанатăп». Кĕçĕн сержантăн Рейнон арăмĕ — Ваара Лейла хăйĕн çыравĕнче çапла ӳпкелешет: «Çак вăрçă вăл — пирĕн çĕршывăн пысăк инкек. Халăх, пуринчен ытларах хĕрарăмсем, питех те кăмăлсăр. Пуринпĕн те нимĕçсем айăплă тесе пур çĕрте те уçăнах каласçĕ. Эпĕ те çаплах шутлатăп тата Гитлера ылханатăп».

Совет металлургĕсем хăйсене хăйсем шеллемесĕр паттăрăн тата пысăк тухăçлăхпа ĕçленин чаплă тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Сталевар-скоростниксен движенийĕ ытларах та ытларах сарăлса пырать. Петровский ячĕпе тăракан заводри сталеварсем Шипановпа Торяник юлташсем планпа çирĕплетнĕ срокран тăтăшах сехет—сехет çурă малтан хурçă шăратса кăлараççĕ тата планран иртнĕрен çĕршер тонна металл параççĕ. Лысьвенскри заводăн сталеварĕ Нелюбин юлташ металла 9 сехет те 40 минута вырăнне 7 сехет те 30 минутăра шăратса кăларать.

Фронт валли паракан кирек-мĕнле боевой заданисене те металлургсем чыслăн пурнăçа кĕртеççĕ. Дзержинский ячĕпе тăракан заводри мартен цехĕн коллективĕ, халиччен ахаль йышши хурçă кăларнăскер, пысăк пахалăхлă хурçă шăратма вĕренсе çитнĕ. Войков ячĕпе тăракан заводăн 3-мĕш домна кăмакин доменщикĕсем кашни тонна металл шăратса кăлармассерен 192-шер килограмм кокс переведетлеççĕ. «Днепроспецсталь» заводĕнчи прокатчиксем пĕр станăн ĕçлес пултарулăхне никĕ хута яхăнах ӳстернĕ.

Хура металлургири малта пыракансенчен тĕслĕ металлургири стахановецсем те юлмаççĕ. Пышминскри пăхăр шăратакан заводăн кадрти ватă рабочийĕ Тимофей Матвеевич Степайкин пăхăр шăратас вăхăта чылай кĕскетнĕ. Унăн пример илсе литейнăй цехри мĕнпур рабочисем пăхăра тăтăшах хăвăрт шăратса кăлараççĕ. Балхашри тата Иртыш заводсем программăна тăтăшах иртерсе тултараççĕ, уйрăм куçенче вара планта пăхнинчен икĕ хут нумайрах пăхăр шăратса кăлараççĕ. Металл туса кăларассине таттисыпăçăр ӳстерсе пынипе металлургсем пирĕн патăн Хĕрлĕ Çара фашистла, варварсене çĕмĕрме пулăшаççĕ.

СОВЕТ ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔНЧЕН

Августăн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ыран августăн 10-мĕш тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Смоленск, Коростень, Белая Церковь енĕсенче тата фронтăн Эстонири участокĕнче противника хирĕç çĕрĕпех çапăçнă.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче разведка тăвас ĕç пулса пынă.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе сыхăну тытса, противникăн çапăçу хирĕнчи мотомехчаçĕсемпе пехотине пыра-пыра çапнă тата унăн аэродромĕсем çинчи авиацине атакăланă.

* * *

Хĕрлĕ Çăран Бирман юлташ командир пулса ертсе пыракан Н-ски чаçĕ Германи çарĕн чи лайăх дивизийĕ тесе хисепленекен 163-мĕш пехотнăй дивизин 307-мĕш полкне çапса аркатнă.

Тытса илнĕ документсем тăрăх тата пленнăйсем кăтартса панă тăрăх, çакна палăртнă: 307-мĕш полка Финляндин Норвегири Нарвик портĕнчен куçарнă. Хăйне çапса аркатиччен икĕ кун малтан фашистсен полкĕ фронтăн Бирман юлташ чаçĕ тытса тăракан участокне темиçе хутчен атакăлама пăхнă. Татăклă наступлението килес умĕн нимĕçсем пирĕн позицисем çине артиллерирен тăватă сехет хушши вăйлăн персе тăнă. Артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн, фашистсем наступлението тухнă. Фашистсен пĕрремĕш эшелонне Завершинский лейтенантăн подразделенийĕ сирсе пăрахнă. Подразделенин артиллерийĕпе пулеметчĕсенчен пенине пула нимĕçсен нумай салтакĕсем пĕтнĕ.

Хире-хирĕç тăрса çапăçнă чухне ăнăçу тăваймасăр, 307-мĕш полкăн командованийĕ хăйĕн пĕр батальонне тата белофинсен икĕ ротине красноармеецсен чаçĕсене фланран çавăрса илме янă. Анчах кунта та нимĕçсем поражени тӳснĕ. Икĕ хутĕнче те атака ăнăçсăр пулни противникăн войскисене хавшатса çитернĕ. Совет войскисен чаçĕн командованийĕ, çакăнпа усă курса, пĕр вăхăтрах темиçе енчен контратакăна куçнă. Фашистсен полкне çавăрса илнĕ. Çавăрса илнĕ çĕртен тухма хăтланса, кӳлĕн тепĕр çыранне ишсе каçас шутпа, нимĕçсен нумай салтакĕсемпе офицерĕсем кӳлле ыттăннă, анчах вĕсем пурте пекех е шыва путнă, е пирĕн снайперсем вĕсене персе ӳкернĕ. Ытти нимĕçсем пысăк ушкăнсемпе тыткăна парăнма пуçланă. Çапăçу хирĕнче Бирман юлташăн чаçĕнчи боецсем юсавлă станковăй пулеметсем 17 пулемет, 1 противотанковăй оруди, 12 миномет, 2 огнемет, нумай винтовкăсемпе боеприпассем тытса илнĕ.

Франц Хоберкорн фельдфебель взводĕнчи тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем нимĕçсен 163-мĕш дивизийĕнчи мĕнпур салтаксем патне çыру янă. Çак çырура çапла каланă: «Пире Норвегирен Совет Росийине хирĕç ăсăр та инкеклĕ вăрçа, çурçĕрти вăрмансемпе шурлăхсене, хăваласа ячĕç. Маннергейм баронпа унăн тарçийĕсене Карелире колонисем туянтарассишĕн эпир вилесшĕн мар. Финн халăхĕ пире кураймасть, вырăс халăхĕ пуçа çиекен вут-çулăмпа кĕтсе илет. Гитлер пĕтĕ. Хăвăрăн кунçулăра çав пĕтме тивĕçлĕ авантюрист кунçулĕпе пачах та сыхăнтарма кирлĕ мар. Сирĕн хăвăрăн пурнăçăрсене килйышăрсемшĕн тата ирĕке тухас Германишĕн сыхласа хăварма май пур. Эпир çав майпа усă куртăмăр, усă курăр унпала эсир те. Хĕçпăшала пăрахăр! Тыткăна парăнăр!»

* * *

Хĕрлĕ Çăран майор Буслаев командир пулса ертсе пыракан чаçĕ çĕрле Хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕ патнелле пыракан фашистла танксен колоннине çапса аркатнă. Нимĕçсен пирвайхи танкĕсенĕ асăрхаса илсенех, пирĕн артиллери вĕсем çине хаярăн пеме пуçланă. Иванов наводчик пĕрре персех нимĕçсен ертсе пыракан танкне вут хыптарнă. Çула вут-çулăм çутатса янă. Ку вара нимĕçсен ытти машинисене ăнăçлăн персе çĕмĕрме пирĕн артиллеристсене май туса панă. Фашистла танксен колонни каялла çавăрăннă. Вара тăшман çине совет танкисчĕсем çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Çапăçу хирĕнче фашистсен çапса çĕмĕрнĕ 30 танкĕ выртса юлнă.

* * *

Черновицы облаçĕнчи нимĕç-румын войскисем тытса илнĕ районра совет партизанĕсем оккупантсене хирĕç

Августăн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сольцы, Холм, Смоленск, Белая Церковь тата Умань енĕсенче противника хирĕç вăйлăн çапăçнă.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противникăн мотомехчаçĕсемпе пехотине пыра-пыра çапнă.

Августăн 9-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен 45 самолетне персе антарнă. Пирĕн 25 самолет пĕтнĕ.

Тĕплĕн палăртнă тăрăх, августăн 9-мĕшпе 10-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсем Москав çине вĕçсе пынă вăхăтра нимĕçсенне малтан кăтартнă пек 8 самолет мар, 10 самолет персе ӳкернĕ. Унăн пуçне пирĕн истребительсем ПВО Москаври зонинче нимĕçсен разведка тăвакан 5 самолетне персе антарнă.

* * *

Лухъянов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн Н-ски соединени нимĕçсен 312-мĕш пехотнăй полкĕн икĕ батальонĕ, тата мотопехотин пĕр батальонне çĕкĕрсе тăкнă. Фашистсен войскисене хирĕç çапăçасси Германи батарейисем икĕ сехет хушши артиллерирен персе тăнă хыççăн пуçланнă. Нимĕçсем пирĕн сулахай фланга атакăланă, унта подполковник Степинăн чаçĕ çапăçнă. Степин юлташ чаçĕн боецĕсем, артиллери тата минометсен группи пулăшнипе, нимĕçсен пĕрремĕш эшелонне каялла хăваласа янă тата ăна пысăк çухатусем кӳнĕ. Çавăн пекех иккĕмĕш атакăна та ăнăçлăн сирсе янă.

Икĕ атака хыççăн нимĕçсем сылтăм фланг çине каллех артиллерирен персе тăма пуçланă. Пĕр сехетрен артиллерирен персе тăрассине тăруках чарса лартнă. Сылтăм фланг çине нимĕç танкĕсен группи тапăнса пынă. Ăна оборона лининчен ирттерсе шала кĕртсе янă та унта пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 23 танкне çĕмĕрсе пĕтернĕ. Противникăн пехотине унăн танкĕсенчен уйăрса илнĕ те миномĕтсенчен пеме пуçланă. Çапăçура Сидоров, Кожемякин тата Михеладзе минометчисем хăйсене уйăрмăнах палăртнă, вăл 200 хут ӳстернĕ.

Августăн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Смоленск, Белая Церковь, Умань енĕсенче тата фронтăн Эстонири участокĕнче противника хирĕç çĕрĕпех çапăçусем пулса пынă.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противникăн мотомехчаçĕсене, пехотине тата артиллерине пыра-пыра çапнă.

* * *

Сидельников юлташ командир пулса ертсе пыракан кавалери группи противникăн шалти тылĕнче ăнăçлăн кĕрешет. Ăнсăртран пыра-пыра тапăннипе совет кавалерисчĕсем фашистсен пехотнăй чаçĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкаççĕ, обозсене пĕтереççĕ тата тăшманăн связисчĕсене тыта-тыта чараççĕ. Çак кунсенче разведка фронта нимĕçсен 480-мĕш пехотнăй полкĕ пырса çитнине палăртнă. Сидельников юлташ ăна атакăлама шутланă. Пĕр çурмаэскадрон тавра çавăрăнса иртсе кайма хăтланнă, анчах лачакана кĕрсе ларнă. Çакăн хыççăн пирĕн кавалеристсем контратакăна куçнă. Фашистсен полкĕн иккĕмĕш ротине лачака патне хĕссе пырса йăлтах пĕтерсе тăкнă. Унтан Сидельников группинчи боецсем полка пайăн-пайăн сапаласа янă та, тăшманăн темиçе ротине хупăрласа илнĕ. Пĕр-пĕринчен уйăрса янă ротăсене хăвăртах аркатса янă. Фашистсен салтакĕсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе тыткăна парăнма пуçланă. Нимĕçсен 480-мĕш полкĕн сыхланса юлнă сахал йышлă юлашкийĕсене 5—6 километра хăваласа янă. Совет боецĕсем нимĕçсен 19 станковăй пулеметне, 8 миномĕтне, 31 çăмăл пулеметне, противотанковăй 6 орудине, 10 автомашинине тата темиçе мотоциклне пĕтерсе тăкнă. Нимĕç салтакĕсене 500 çынна çити вĕлернĕ тата амантнă.

* * *

П. станцийĕн районĕнче нимĕçсем Н. юханшывĕ урлă каçма хатĕрленнĕ. Артиллерирен персе хӳтленнипе фашистсен сапĕрĕсем взрыв туса аркатнă кĕпере юсама тата кĕпертен сылтăмра понтоннăй переправа тума пуçланă. Грушелевский капитанăн бронепоездне хăйĕн орудийĕсемпе пулеметчĕсенчен персе, юханшывăн сылтăм çыранне сыхлакан стрелковăй полкăн ĕçĕсене пулăшма приказ панă. Юханшыв варрине тăшмансен питех те нумай понтонĕсем пырса капланасса кĕтсе илнĕ хыççăн, бронепоезд орудисенчен пеме пуçланă. Малтанхи снарядсемех тĕл пырса ӳкнĕ. Понтонсен татăкĕсем фашистсен сапĕрĕсемпе пĕрлех сывлăша сирпĕнсе кайнă. Переправăна пĕтерсе тăкнă хыççăн, бронепоезд кĕперсене юсаса майлаштаракан сапĕрсем çине пеме пуçланă. Темиçе залп кăларса янă хыççăн кĕпер юлашкийĕсене те çĕмĕрсе тăкнă. Юханшыв урлă переправа хывма нимĕçсем виçĕ хутчен хăтланса пăхнă, анчах бронепоезд çинчи орудисенчен пенипе пысăк çухатусем тӳссе, кашни хутĕнчех каялла чакнă.

Тул çутăлас умĕн бронепоезд çинчен пенипе хӳтленсе, пирĕн пехотинецсем юханшыв урлă ишсе каçнă та, вăйлăн тата хăвăрт пырса çапса фашистсене П. станцинчен хĕссе кăларнă. Çапăçусем хушшинчи перерывра бронепоездăн паровозĕпе хăшпĕр вагонĕсем боеприпассем илме юнашар станцине кайнă. Çакăнпа усă курса, тăшманăн 8 танкĕпе пехота подразделенийĕ юлнă бронсвагонсем çине талăннă. Тăшмана çывăхах ярса, бронепоездра фашистла салтаксен пĕр ушкăнне тупса палăртнă, вара ăна гранатăсемпе персе пĕтерсе тăкнă. Çапăçу вăхăтĕнче Тимош юлташ фашистсене атакăлама хăй чи малтан ывтăннă, хăйпе пĕрле хăйĕн подразделенийĕн боецĕсене пурне те ертсе кайнă. Çапăçура аманнă пулин те, Тимош юлташ кĕрешӳ хирĕнчен кайман, лимĕçсен подразделенине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкичченех боецсене хавхалантарса пынă.

* * *

Югославин сăрт-тăвăсемпе вăрманĕсенче партизансен отрячĕсем немĕç фашисчĕсен войскисене хирĕç хăюллăн çапăçаççĕ. Югослави патриочĕсем Германипе Италин оккупацийлĕ çарĕн пысăк войскисем çине часрах та часрах тапăнаççĕ. Çак кунсенче пĕр вăхăтрах партизансен темиçе отрячĕ регулярнăй войскăсен немĕçсемпе хорватсенчен тăракан икĕ батальонĕ çине тапăннă та вĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Фашистсен 250 салтакĕсемпе офицерĕсем вилсе тата аманса юлнă. Партизансем 5 çăмăл тупă, икĕ зенитнăй установка, 7 станковăй пулемет, 200 яхăн автоматсемпе çăмăл пулеметсем, 20 пин патрон туртса илнĕ. Партизансем нимĕçсен хĕçпăшалĕпе усă курма лайăх вĕреннĕ тата упа оккупантсене хирĕç çапăçнă чухне ăнăçлăн усă кураççĕ. Юлашки эрне хушшинче партизансем нимĕçсенчен туртса илнĕ зенитнăй пулеметпа фашистсен виçĕ самолетне персе ӳкернĕ. Нимĕçсен карательнăй отрячĕсем кашни утăмрах партизансем вăйлăн хирĕç тăнине тĕл пулаççĕ. Фашистсен пĕр часĕ Загребран Новска виçĕ кун хушши пынă. Чугунçула партизансен отрячĕсем 12 çĕрте çĕмĕрнĕ пулнă. Нимĕçсен çула юсама нумай вăхăт пĕтермелле пулнă. Анчах çак вăхăтра вĕсен кашни расрах нумай салтакĕсем пĕтнĕ, мĕншĕн тесен партизансем çула юсакан фашистсем çине персе тăнă.

* * *

Совет текстильщикĕсем фронта тата тыла валли кирлĕ продукцие кăларассине тăтăшах ӳстерсе пыраççĕ. Серпуховри çăм тĕртекен «Пролетарий» фабрика, Обуховри Ленин ячĕпе тăракан фабрика, Москаври «Освобожденный труд» фабрика, Ивановăри Меланжевăй комбинат, Ленинградри «Рабочий» фабрика ăнăçлăн ĕçлеççĕ, вĕсем производствăллă программăна чылай ирттерсе тултараççĕ. Юрьевецри текстильнăй фабрикăри рабочисем мирлĕ вăхăтринчен 25—30 процент тытларах çип арласа кăлараççĕ. Куйбышеври Свердлов ячĕпе тăракан фабрика коллективĕ 7 уйăхри программăна июлĕн 11-мĕшĕнчех ĕнтĕ тултарнă, планран ирттерсе паха ĕçлекенĕ вунпилĕ пин метр панă. Глуховски комбинатăн çип арлакан фабрикинчи работницăсем Доронина, Гришечкина, Старостина, Монина, Королева, Соколова тата Хамченко юлташсем нормăна икĕ хута яхăн ирттерсе тултараççĕ. Вязниковăри «Парижская коммуна» фабрикăри стахановка Крюкова юлташ кашни кунах 132 килограмм çип арласа кăларать, норма тăрах 91 килограмм арламалла. Ивановăри Дзержинский ячĕпе тăракан фабрикăра мастер помощникĕн 60 çулти Косульников юлташăн пуçаруне анлăн сарса пыраççĕ. Хăйĕн икĕ ывăлĕпе пĕрле Косульников юлташ пир тĕртекен 76 станокран тăракан комплектсене ĕçлеттерме тытăннă. Косульников юлташ примерне мастер помощникĕсем Пшеничков, Красин, Баранов тата ытти юлташсем те йышăнса илнĕ. Вĕсем халĕ 72-шер станокпа ĕçлеççĕ.

вагонсен командисем орудисемпе пулеметсенчен пеме пуçланă, тăшманăн 3 танкне тата 100 пехотинецне яхăн пĕтерсе тăкнă. Персе тăнине чăтаймасăр, ытти танксемпе пехота каялла тарнă. Тăшмана хирĕç 5 кун хушши çапăçнă вăхăтра Грушелевский капитанăн бронепоездĕ тăшманăн 3 танкне, пĕр самолетне, 43 автомашинине, 10 мотоциклне тата фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе çĕр çын пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фашистла захватчиксем оккупациленĕ районсенче нумай йышлă партизансен отрячĕсем ăнăçлăн кĕрешеççĕ. М. юлташ ертсе пыракан отрядри хăюллă боецсем 8 кун хушшинче 4 кĕпере взрыв туса аркатнă тата нимĕçсен 4 грузовикĕпе штабнăй пĕр çăмăл машинине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем тытса илнĕ Р. ятлă рабочи поселок çине пырса тапăнни уйăрмах ăнăçлă пулнă. Партизансем нимĕçсен охранине штыксемпе чиксе вĕлернĕ те, фашистсен стрелковăй чаçĕн штаб çуртне гранатăсем ывăтнă. Нимĕçсен 12 офицерне пĕтерсе тăкнă. С. районĕнче нимĕçсен çĕр выртма чарăннă штабнăй роти çине отряд çĕрле пырса тапăнса çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсен 170 салтакне яхăн вĕлернĕ. Т. юлташ командир пулса ертсе пыракан отряд противникăнне 2 грузовой автомашинине тата вăрманти базăсенчен пĕринче фашистсем сыхласа усранă бензин тултарнă 400 пичкене взрыв туса аркатнă. Çак отрядри партизансем фашистсен 7 танкне кашкăр шăтăкне сиктернĕ. Танксем çинчен 14 пулемет тата 5 çăмăл тупă илнĕ. Фашистла захватчиксене хаяр курайманлăхпа çунакан совет патриочĕсем партизансен отрячĕсене кунсеренех нумайăн хутшăнаççĕ. О. районĕнче партизансен отрядне старик-колхозник Мокеев юлташ кĕнĕ. Вăл çапла каланă: «Эпĕ ватă, анчах проводник пулса ĕçлесе эпĕ сире пысăк пулăшу пама пултаратăп. Эпĕ хамăн пĕтĕм пурнăçа çак вырăнсенче пурăнса ирттернĕ тата кунти кашни утмăçула, кашни тĕмене лайăх пĕлетĕп».

* * *

Финсен çарĕнче военно-полевой суд-сем вăйлăн ĕçлеççĕ. Пирĕн чаçсем Вяртсиляра военно-полевой судăн канцелярине тургта илнĕ. Тытса илнĕ документсем хушшинче военно-полевой судăн приговорĕсене тупнă. А. Торниайнен, Г. Суалтонин тата П. Куонен ятлă салтаксен ĕçĕ пирки йышăннă приговорсенче «дисциплина хыттăн вăйăрланчĕ», «командирсен приказĕсене пурнăçа кĕртмен тĕслĕхсем час-часах пулса пыма пуçларĕç», тесе палăртнă. «Уйрăм чаçсенче салтаксемпе офицерсем пĕр-пĕрин çине тăшманла пăхма пуçланă», тенĕ. 12-мĕш пехотнăй бригадăри Э. Виртанен ятлă рядовой салтак ĕçĕ пирки çырнă протоколра вăл «пĕрмаях офицерсене честь памасть, хăйĕн командирĕн сăн-сăпатĕпчен кулать», тесе каланă. Виртанена персе вĕлермелле туса приговор йышăннă. Çав бригадăри М. Лейно ятлă сапер ĕçĕнче çапла каланă: «Вырăссемпе вăрçма йывăр. Пирĕн офицерсем пире вилме хăваласа каяççĕ, тесе каласшă». Лейнона вĕлермелле туса приговор йышăннă. 10-мĕш пехотнăй бригадăри П. Кивиярви ятлă салтак-радист ĕçĕ пирки çырнă заключенире çапла кăтартса панă: «Вăл начар офицерсене вĕлерме салтаксене пĕр хутчен мар чĕннĕ. Сапернăй ротăн офицерне персе вĕлерессине унăн влиянийĕпе тунă тесе шутлама пулать». Ĕç тăрăх — «персе вĕлермелле» тесе приговор йышăннă.

Офицерсем çухаласси, уйрăмах çапăçу вăхăтĕнче çухаласси, яланхи явлени пулса тăнă. Атака вăхăтĕнче рота командирне вĕлернĕ тесе шанмасăр, Вяртсиляра 7 салтака персе пăрахнă. Полваярви ялĕ патĕнче çапăçнă вăхăтра красноармеецсем сарайсенчен пĕринче финн офицерĕсен 4 виллине тупнă. Тыткăна илнисем каласа панă тăрăх, вĕсене рядовойсем çине тискерле пăхнăшăн финн салтакĕсем хăйсемех вĕлернĕ.

* * *

Совет железнодорожникĕсем, пурнăçа шеллемесĕр, хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Фронт çывăхĕнчи çулсем çинче паллăмар пиншер геройсем, тăшман самолечĕсем персе тăнине пăхмасăрах, кашни кун поездсене илсе çӳреççĕ, çулсене юсаççĕ, çыхăнăва лайăх ĕçлеттереççĕ. Машинист Кирюшин юлташ илсе пыракан çар эшелонĕ çине фашистсен бомбардировщикĕ пулеметран пенĕ. Машинист тата машинист помощникĕ, аманнă пулсан та, эшелона маллаллах илсе пынă тата ăна кирлĕ вырăна срокчен пĕр сехет малтан илсе çитернĕ. Тăшман самолечĕ çинчен персе пуляпа амантнă машинист Мальков юлташ поезда чармасăрах хăйне-хăй перевязка тунă та, поезда станцине срокра илсе çитернĕ.

Çар грузĕ тиенĕ, К. станцинче тăракан поезд çине тăшман бомбардировщикĕ тапăннă. Поездăн хыçалти вагонĕ çунма пуçланă. Бригада çунакан вагона хăвăрт вĕçертсе янă. Ытти мĕнпур эшелонне станцинчен сиймĕчех аякkалла илсе кайма шутланă. Фашистсен самолечĕ поезд хыççăн хăваласа аялалла анма пуçланă. Поезд машинисчĕ Онторалех юлташ тормоз парса состава хăвăрт чарса лартнă. Астан маневрсем туса, машинист поезда кирлĕ çĕре пĕр сиенсĕрех илсе çитернĕ.

З. станцийĕ çине фашистла авиаци пырса тапăннă вăхăтра питех те кирлĕ груз тиенĕ составри 2 вагон çунма пуçланă. Паровозсен приемщикĕ Можогин юлташ состава хăвăрт вĕçертсе илнĕ те, ăна хăвăртрах хăрушăсăр вырăна илсе кайнă. Тăшман самолечĕсем персе тăнă хушăра технически контора начальникĕ Набойщиков юлташ хаклă оборудованисем тиенĕ 33 вагона çăлса хăварнă. Составитель Липатон юлташ аманнă боецсене лартнă санитарнăй поезда пушар варринчен илсе тухнă. Вооружени тата боеприпассем тиенĕ поездсем фронт патне тăтăшшишĕр пырса тăраççĕ.

Августăн 9-мĕшпе 10-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсем Москав çине вĕçсе пыни

Августăн 9-мĕшпе 10-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсем темиçе группи Москав çине вĕçсе пыма хăтланса пăхнă. Хула патне пĕчченшер самолетсем çеç вĕçсе пынă, ытти сене зенитнăй батарейăсенчен персе тата пирĕн çĕртлехи истребительсем салатса янă. Хула çине вут чĕртекен тата фугаснăй бомбăсем темиçе шпука пăрахнă. Пурăнмалли çуртсенче темиçе пушар тухнă. Вилнисем тата аманнисем пур. Вăрçă объекчĕсем сиен курман.

Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн авиацин çухатусем пулман.

Августăн 10-мĕшпе 11-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсем Москав çине вĕçсе пыни

Августăн 10-мĕшпе 11-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсем темиçе группи Москав çине массăллăн вĕçсе пыма хăтланнă. Зенитнăй батарейăсем пенипе тата çĕрлехи истребительсен заградительнăй отрячĕсем тăшман самолечĕсене салатса янă. Противникăн Москав патне вĕçсе пынă пĕчченшер самолечĕсем вут чĕртекен тата фугаслă бомбăсем пăрахнă. Пурăнмалли çуртсенче темиçе пушар тухнă. Вилнисем тата аманнисем пур. Вăрçă объекчĕсем сиен курман.

Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн авиацин çухатусем пулман.

Совет самолечĕсем Берлин районĕ çине иккĕмĕш хут тапăнни

Августăн 8-мĕшпе 9-мĕш хушшинче çĕрле совет самолечĕсен группи Германипе иккĕмĕш хут вĕçсе кайнă, пуринчен ытларах разведка тăвас тĕллевсемпе вĕçнĕ, тата Берлин районĕнчи çар объекчĕсемпе чугунçулсем çине вут чĕртекен тата фугаснăй бомбăсем пăрахнă. Летчиксем пушарсем тухнине тата взрывсем пулнине асăрханă. Германин зенитнăй артиллерийĕнчен пенни витĕмлĕ пулман.

Пĕр самолетсăр пуçне, пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене тавăрăннă, тавăрăнман самолета шыраççĕ.

Оборона фончĕ валли

Тăвай районĕнчи учрежденисемпе предприятисенче тата колхозсенче ССРП оборонин фондне вăйлатма ĕçсыннисем хăйсен пĕр кунхи ĕçĕкçине тата ĕçкунĕсемпе ытти хаклă япаласене хывaççĕ.

Вырăс Нăрвашри «Культура» колхоз колхозникĕсем çĕршыв оборонин фондне 3865 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă. Колхоз председателĕ А. Иванов юлташ 95 тенкĕ укçа тата 540 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕ. Çавăн пекех учительница В. Гурьева юлташ 500 тенкĕлĕх, врач А. Куликова юлташ 450 тенкĕлĕх, колхозниксем А. Егорова, М. Аранова юлташсем 200-шер тенкĕлĕх заем облигацийĕсене оборона фондне хывнă. Кунти колхозниксем уйăхра пĕрер ĕçкунне оборона фондне памалли пулчĕç.

В. ДАНИЛОВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли сĕт-çу продукчĕсем параççĕ

Çĕрпӳри маслозаводра ĕçлекен рабочисемпе служащисем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Завод чăкăт тумалли иккĕмĕш квартал планне 190 процент, çу кăлармалли плана 180 процент тултарнă. Завод коллективĕ оборона фондне 5 центнер чăкăт, 5 центнер çу пама йышăнчĕ. Кунсăр пуçне кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине оборона фондне параççĕ.

Я. СЕРГЕЕВ.

Шупашкарти столовăйсенче ӗçлекенсем воскресникре чугунçул линийĕ çине ӗçлеме каяççĕ.
Е. ЦЫГАНОВ фото-ӳкерчĕкĕ.

Пирĕн патриоткăсем

Совет Союзĕнчи малта пыракан хĕрарăмсем Совет Союзĕнчи мĕнпур хĕрарăмсене фабрикăсене тата заводсене ӗçлеме кайма тата кашни хулана, кашни яла, кашни киле тăшман пырса кĕрейми çирĕп крепость туса хума чĕнсе каланине Чăваш республикинчи ӗçĕрарăмĕсем пысăк хаваслăхпа пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Производствăра ӗçлеме хăмăл тăвакан хĕрарăмсен йышĕ кулленех ӳссе пырать. Производствăна пынă хĕрарăмсем ӗç процесне хăвăртрах вĕренсе, тăван çĕршыва ытларах продукци парса тăракан работницăсем пулма ĕмĕтленсе ӗçлеççĕ. Июль уйăхĕн малтанхи кунĕсенче Сĕнтĕрвăрринчи древтехникумра тата вăтам шкулсенче вĕренекен çамрăк хĕрачасем Куславккари комбината ӗçлеме кайма хăмăл тунă. Комбинат дирекцийĕ çамрăк хĕрсен хăмăлне пурнăçа кĕртнĕ, вĕсене пурне те ӗçлеме илнĕ. Вĕсем халь ӗçе вĕренсе çитнĕ. Валентинăпа Зоя (аппăшĕпе йăмăкĕ) кулленхи нормăна 130 процент таран тултарса ӗçлеççĕ. Производствăна маларах пынă А. Архипова тата Ильина юлташсем куллен виçшер норма тăваççĕ. Дирекци древообделочнăй цехра сборщица пулса ӗçлекен Ларионова юлташа тепĕр профессине вĕренме сĕннĕ пулнă. Ларионова юлташ, цехри мастерсем куллен пулăшса пынипе, часах çĕнĕ профессине вĕренсе çитнĕ. Халĕ вăл нормăна 215 процент тултарса пырать. Çавăн пекех, комсомолка-стаханочница Мария Мясникова пĕтĕм вăя ӗç тухăçлăхне хăпартса пырас ӗçе хурать. Пушă вăхăтсенче хăйĕн пĕлӳлĕхне ӳстерме тăрăшать. Мясникова юлташ хăйĕн ӗçне лайăх вĕренсе çитнĕ, хăйпе юнашар ӗçлекен юлташсене яланах пулăшса пыма тăрăшать. Халĕ ăна смена мастерĕн помощникĕ пулса ӗçлеме лартнă. Ку ӗçре те вăл хăйĕн пултарулăхне кăтартать.

Ӗçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартса ӗçлекен работницăсем республикăри ытти предприятисенче те сахал мар. Вăрмарти спортинвентарь фабрикинче ӗçлекен стахановка А. Артемьева юлташ ӗç нормине яланах 160 процент таран тултарса пырать. Вăл туса кăларакан продукцин пахалăхĕ яланах лайăх пулать. Токарь отделенинче ӗçлекен стахановка Е. Яковлева юлташ икшер норма тăвать.

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан артельте пурте пекех хĕрарăмсем ӗçлеççĕ. Вĕсем пысăк тухăçлăхпа ӗçленипе артель хăйĕн программине квартал-тан кварталах ăнăçлăн тултарса пырать. Стахановка Филиппова т. ыт. те кулленех заняти хыççăн ӗçлеме юлаççĕ. Гаврилова, Долгорукова, Горелова, Казачкова, Крылова, Сиделина, Горбунова, Молодова т. ыт. те кулленех икшер норма тăваççĕ. Стахановка Кузнецова июнь уйăхĕнчи заданине 473 процент тултарнă, июль уйăхĕнче вăл кулленех икшер норма туса пынă.

Совет хĕрарăмĕсем колхоз производствинче те тĕлĕнмелле пысăк хастарлăхпа ӗçлеççĕ. Канаш районĕнчи «Комсомол» колхозри колхозницăсем фронта тухса кайнă упăшкисемпе ывăлĕсем вырăнне ӗçлеме тăраççĕ. Чакас ялсовечĕн депутачĕ Варвара Андреева бригадир пулса ӗçлет. М. Терентьевăпа А. Николаева колхозницăсем çĕртме сухи тунă çĕрте ӗç нормине 130 процент таран тултарса пынă.

Çĕмĕрле районĕнчи «Красный Октябрь» колхозăн сĕт-çу форминче ӗçлекен колхозницăсем сĕт сумалли заданине кашни уйăхрах ирттерсе тултараççĕ. Çапла вара, малтанхи çурçул хушшинче сĕт суса илме панă плана 120 процент тултарнă. Чи лайăх дояркăсем Н. Семенова, О. Юдина тата В. Кошкина юлташсем ӗç нормине пĕрмаях 130-шер процент тултарса пыраççĕ. Вĕсем ӗçлекен фермăра пĕр вырăх та вилни пулман. Фермăра ӗçе лайăх организацилени государствăна сĕт тăратмалли обязательствăна срокченех тултарма май панă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра та колхозницăсем патриотла ӗçсем тăваççĕ. Кашни колхозница хăйĕн вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа ӗçлесе обществăллă хуçалăха вăйлатса пыма тăрăшать. Колхоз председателĕ Д. Антонов юлташ колхозницăсене куллен хавхалантарса пырать, вĕсен мухтавлă ӗçĕсем çинчен колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тата бригадăсенчи канашлусенче каласа парать, вĕсенчен ӗçлеме вĕрентсе пырать.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз районра чи малтан 1941 çултăн государствăна тырă, аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм тата утă парса татнă.

Фермăра ӗçлекен М. Никитинпа В. Алексеева юлташсем вырăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартма панă заданине 209 процент пурнăçланă. Çакăнтăн вĕсене аванспа икшер сысна çури парса премиленĕ. Ене сăвакан Н. Яковлевăпа Е. Осипова колхозницăсем хăйсем çумне çирĕплетсе панă ĕнесенчен 12.700 литр сĕт суса илсе, заданине ытлашшипех тултарнă. Ферма вырăхчĕрлĕх ĕрчетмелли плана та тултарнă.

Колхоз хĕрĕсем тракторсемпе тата комбайнсемпе ӗçлеме хăюллăн вĕренеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ ĕнтĕ сложнăй машинăсемпе ӗçлеме тытăнчĕç. Кăçал Сĕнтĕрвăрри машинно-тракторнăй станцинче пуçласа хĕрарăмсенчен пĕр бригада организациленĕ. Çак бригада чи кĕске срокрах хăйĕн чаплă ӗçĕсемпе мухтава тухрĕ, вăл ытти бригадăсем хушшинче чи малта пыракан бригада пулса тăчĕ. Хĕрарăмсен трактор бригадинче ӗçлекен Вершкова, Иванова, Кузьмина т. ыт. тракторист-кăсем те хăйсен машинисене отлично пахалăхпа юсанă. Нумаях пулмасть машинно-тракторнăй станцине Просвиркинăпа Яковлева юлташсем ӗçлеме пынă. Просвиркина юлташ фронта тухса кайнă упăшки вырăнне ӗçлеме юлнă. Халĕ кашни трактор бригадинчех 2—3 хĕрача трактор çинче ӗçлеме вĕренеççĕ.

Çакăн пек тĕслĕхсем ытти районсенче те нумай. Ака, Чкаловски районри «Путь Ленина» колхоз колхозници Е. Портнова юлташ икĕ çул ытла трактористка пулса ӗçленĕ.

— Çак харушă кунсенче эпĕ ним шухăшламасăр пурăнма пултараймастăп. Эпĕ трактористка, манăн тĕп ӗç—трактор çинче ӗçлесси пулать, — тет вăл. Портнова юлташ халь фронта тухса кайнă Ялуков тракторист вырăнне ӗçлеме юлнă. Çавăн пекех, Вăрнар машинно-тракторнăй станцинче прицепщица пулса ӗçлекен Быкова юлташ, упăшкине Хĕрлĕ Çара ăсатнă хыççăн унăн тракторĕ çинче ӗçлеме тытăннă. Быкова юлташ хăйĕн ӗçне лайăх тăвать. Ӗç нормине кулленех 150 процента çити тултарса пырать. Халĕ 39 хĕр трактор бригадисенче ӗçлеççĕ.

Совет çыннисем — арçынсем те, хĕрарăмсем те — пĕр ĕмĕтпе ӗçлеççĕ. Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ тума! Çакă вăл пĕтĕм ӗççыннисен хăватлă лозунгĕ. Совет халăхĕ мĕншĕн кĕрешнине пĕлсе тăрать, вăл тăшмана ĕмĕрлĕхех çĕмĕрсе тăкасса шанса тăрать.

А. Г-в.

Палач Гитлер вырăс халăхне нихăçан та чуралантараймĕ

Германин фашистла правителĕсем совет халăхне хирĕç вăрçă пуçларĕç. Вĕсем пирĕн çĕршыва парăнтарса çаратма, ăна хăйĕн правăсăр колонийĕ туса хума, вырăс халăхне вара немĕçлетсе, ăна немĕç помещикĕсен, князĕсен тата баронĕсен аллине пама ĕмĕтленеççĕ.

Вырăс халăхне чуралантармалли хăйĕн киревсĕр планĕсем çинчен Гитлер темиçе хутчен те тухса калана. Хăйĕн «Манăн кĕрешӳ» ятлă кĕнекинче Гитлер çапла çырнă: «Эпир халĕ Европăри çĕнĕ территори çинчен калаçатпăр пулсан, эпир вара чи пирвай Россия çинчен çеç шухăшлама пултаратпăр». Çав кĕнекерех Гитлер Германи империйĕн чиккисем Хĕвелтухăçĕнче Урал тăвĕн тӳрчĕсем тăрăх каймалла, тесе çырнă.

Гитлер хыççăн ытти фашистсем те вырăс халăхне пăхăнтарасси çинчен тĕрлĕ майлă калаçаççĕ. Фашистсен теоретикĕ ролĕнчи барон Розенберг çапла калать: вырăс çĕрĕсене немĕçсен аллинче тытса тăмашкăн тата вырăс халăхне пăхăнтарса тăмашкăн немĕçсене çӳлти турă хăй хушать, тет.

Немĕç князĕсен, баронĕсен, помещикĕсен пĕтĕм ĕмĕчĕсем Совет Союзĕн çĕрĕсене туртса илесси тата вырăс халăхне чуралантарасси пулса тăраççĕ.

Немĕç фашисчĕсем çынсене кураймаççĕ, вĕсем мĕнпур этемлĕхе пĕтерсе хума хатĕр. Вĕсем мĕнпур халăхсене хăйсен тăшманĕсене, конкуренчĕсене, хирĕç тăраканĕсем тесе шутлаççĕ. Çавăнпа та вĕсем ытти халăхсене пурне те хаярран хĕсĕрлесе вĕлерсе пĕтереççĕ. Вĕсем çынсене çавтери тискеррĕ: кураймаççĕ, çынçиенсем пулса тăраççĕ. Немĕç фашисчĕсем уйăм «теори» (раса теорийĕ) те шутласа кăларнă. Çав теори тăрăх пур çынсем те аслă тата кĕçĕн расăсем, «тулли хаклă» тата «тулли мар хаклă» çынсем çине уйăрăлаççĕ.

Фашистла ирсĕрсем, вăрă-хурахсем, хыснана çаратакансем хăйсене «аслă» раса тесе хисеплеççĕ, аслă раса вара, вĕсен шучĕпе, улпутсем пулса тăраççĕ, ытти çынсем, кĕçĕн раса пулса тăракансем — чурасем пулаççĕ.

Мĕнпур çынçиенсен пуçлăхĕ Гитлер пĕррехинче çапла каланă: «Лайăх расăллă мар çынсем пурте юрăхсăр ăпăр-тапăрсем пулса тăраççĕ» тенĕ, юрăхсăр ăпăр-тапăра вара пĕтермелле икken.

Гитлерпа унăн банди пуринчен ытла вырăс халăхне çавтери хытă, тискер кайăкла кураймасть. Фашистсем мĕнпур славян халăхне кураймаççĕ, вĕсене чи кĕçĕн раса вырăнне, юрăхсăр ăпăр-тапăр вырăнне шутлаççĕ, вĕсене пĕтерме тивĕçлĕ, теççĕ.

Маларах асăннă çав кĕнекерех Гитлер славян халăхне, чи малтан вырăссене, вĕсем «кĕçĕн раса» пулнă пирки, немĕçсем чуралантармалла, тесе çырать. Славянсем пурте, чи малтан вырăссем немĕçсемшĕн хура та йывăр ĕçсем тумалла, славянсене пурне те чура туса хумалла, тет. «Славян раси çынни этем выльăха куçнă тапхăрти çын пулса тăрать. Вăл этемрен упăте патне çывăхрах тăрать. Ăна пĕтĕмĕшпех çын тесе калама çук», — çапла çырнă Гитлерăн ирĕрĕсенчен пĕри Ганс Гюнтер. Тепĕр фашистла çыруçă Шпенглер вырăссем шурă ӳттирлĕ халăх мар, вĕсем «монголоидсем» тет. «Вырăс чунĕ» пăхăнса тăма хăнăхнă. Апла пулсан вырăс çыннисене варягсем кирлĕ, çав варягсем вара вĕсене выльăхсене усранă пек тытса усрамалла. Шпенглер сĕмĕрленсех çапла калать: «чăн-чăн вырăс пире индус е тутар пекех ют кăмăл-шухăшлă» тет.

Гитлер вăл — чурасемпе суту-илӳ тăвакан вăрă-хурах шайккисен çулпуçĕ. Немĕç фашисчĕсем вырăс халăхне хăйсен правăсăр чурисем, чĕлхесĕр выльăх туса хурашăн.

Вырăс халăхĕ хăй халлĕнлĕ историллĕ роль йышăнса тăма пултараймасть тесе кăтартса парас шутпа, немĕç фашисчĕсем тĕрлĕ суяпа элексем шухăшласа кăлараççĕ. Вырăс халăхĕн хăйĕн культури çук, теççĕ фашистсем. Вырăс культури тени — пĕтĕмĕшпех «Германия элеменчĕсем» ӗçленипе пулнă имĕш.

Юнлă вĕри-чирпе чирленĕ Гитлер илтĕнмеллех çапла каланă: эпĕ (Гитлер) «çӳлте тăракан çын пулса, тĕнчене вăрçса илсе ăна пăхăнтаратăп та çĕрĕн тулли влаçлă хуçи пулса тăратăп», тенĕ.

Çав «плана» никĕсе хурса, Гитлер чăн-чăнах та ССР Союзне «çиçĕмле хăвăртлăхпа» пăхăнтарма, унтан вара, хăйĕн вăрă-хурахла ӗçĕсене совет халăхĕсен шучĕпе юсаса, Англине, Америкăна çĕнтерсе хăйне «çĕр чăмăрĕн хуçи» туса хума шутланă.

Акă мĕнле ăссăр план çуралнă ирсĕр этемсен чирлĕ миминче, акă мĕнле картина тухса тăнă ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери политикăллă бандитсен юнпа тĕксĕмленнĕ куçĕсем умне.

Фашистла пуçлăхсем, министрсем, генералсем, губернаторсем т. ыт., Гитлертан, Герингран, Геббельсран пуçласа, чи шултра капиталист-миллиардерсем, фабрикантсем тата банкирсем пулса тăраççĕ. Влаçа иличчен пуян пулман пуçлăхсем те, Германире пуçпулса тăнă вăхăт хушшинче питех те нумай пурлăх çаратса, чи шултăра капиталистсемпе помещиксем пулса тăма ĕлкĕрнĕ.

Хăйсен çĕршывĕнче тата пăхăнтарнă çĕршывсенче миллионшар тенкĕлĕх пурлăх çаратса пуйнă бандитсен, пирĕн ССР Союзĕ çине тапăнса, пирĕн заводсене, фабрикăсене, рудниксене, колхоз çĕрĕсене, чугун çулсене тата пĕтĕм халăх пуянлăхне çаратса, хăйсен аллине çавăрса илес ĕмĕтрен пуçне мĕнле ӳрăх ĕмĕт пултăр тата?

Захватчиксен планĕсем палла: вĕсем совет влаçне пĕтересшĕн фашистла юнлă диктатура туса хурса, царизмпа помещиксене каялла тавăрасшăн, пирĕн аслă, геройла, ирĕклĕхе юратакан совет халăхне ĕç вылăхĕ, правăсăр чурасем туса хурасшăн

Вырăс халăхĕн пурнăçне Гитлер, хăй каланă тăрăх, акă мĕнле тума ĕмĕтленет: «Хĕвелтухăçĕнчи пĕтĕм çĕрсем çинче пысăк именисене немĕçсем çеç тытса тăма пултараççĕ. Ют расăллă халăхпа тулнă çĕршыв, чурасен, ялхуçалăх батракĕсен е промышленность рабочисен çĕршывĕ пулса тăмалла... Кучухнехи крепостной йĕркен тивĕçлĕ формине е чуралăх та туса хумасăр этемлĕх культури аталанма пултараймасть».

Вырăс халăхне чурасем туса хумалла, Российăра чуралла-крепостной строй туса хумалла, унта немĕç помещикĕсене лартса, вырăс халăхне правăсăр тата пĕр пурлăхсăр хăвармалла тесе тӳрех те уçăн калана.

Гитлер чура хуçи тата крепостник пулса тăрать. Малалла вăл çапла калать: «тĕттĕмлĕх тата язычество патне вĕçне çитиех каялла тавăрăнма хăюллăх пулмалла. Культурăпа пĕлӳ улпутсен класĕшĕн паллă хăрушлăх пулса тăрать. Анчах культура патне пыма ирĕк пани, — чурасен класне упраса хăварас тĕллĕпне тата хăрушăрах пулса тăрать... Пĕлӳпе наука çĕнĕрен вăрттăн, привилегиллĕ çынсене çеç тивĕçлĕ культура пулмалла», тет. Çапла вара, Гитлер вырăс халăхĕ валли çĕр çул ытла ĕлĕкрех, крепостничествăн тискер саманинче пулнă йĕркесенчен те хаяртарах йĕрке туса хурасшăн. Вырăс халăхĕ валли тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем валли те чуралăх стройĕ туса хурас тĕллĕпне Гитлерăн киревсĕр планĕсем çавăн пек ĕнтĕ.

Сталин юлташ радио тăрăх каланă хăйĕн сăмахĕнче немĕç фашисчĕсем çинчен: «Тăшман хаяр та сĕмсĕр. Вăл эпир тар юхтарса ӗçленĕ çĕрсене туртса илес, хамăр вăйпа ӗçлесе тунă тырпула тата нефте туртса илес тĕллев лартать. Вăл помещиксен влаçне каялла тавăрас, вырăссен, украинецсен, белоруссен, литовецсен, латышсен, эстонецсен, узбексен, тутарсен, молдавансен, грузинсен, армянсен, азербайджанецсен тата Совет Союзĕнчи ытти ирĕклĕ халăхсен нациллĕ культурипе нациллĕ государственноçне пĕтерсе хурас тĕллев лартать, вĕсене немĕçлетес, вĕсене немĕç князĕсемпе баронĕсен чурисем туса хурас тĕллев лартать. Çапла вара, ӗç Совет государствин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, Совет Союзĕнчи халăхсем ирĕклĕн пурăнасси, е вĕсем чуралăха кĕрсе ӳкесси çинчен пырать», терĕ.

Немĕç баронĕсемпе князĕсем вырăс халăхне ĕнтĕ пирвайхи хут çеç мар чуралантарма, унăн çĕрĕсене туртса илсе унăн хăйхаллĕнлĕ государственноçне пĕтерсе хума хăтланса пăхаççĕ.

Немĕçсен йытă-рыцарĕсем вырăссене 700 çул ĕлĕкрех чуралантарма хăтланса пăхнă. Анчах вырăс халăхĕ 1242-мĕш çулта, Александр Невский ертсе пынипе, немĕçсен тискер полкĕсене Чудское кӳлли пăрĕ çинче çĕмĕрсе тăкса, вĕсене çав кӳллĕн тĕпне пытарнă. Каярахпа немĕçсен йытă-рыцарĕсем вырăс çĕрĕсем çине 1269-мĕш, 1410-мĕш çулта, 1501—1502-мĕш çулсенче, 1558-мĕш çулта çĕнĕрен тапăнма хăтланнă. 1758-мĕш çулта немĕçсем Россия çине каллех тапăннă. 1812 çулта немĕçсем Наполеон çарĕсемпе пĕрле Российăна хирĕç пынă вăрçа хутшăннă. Вара кашнинчех, пĕтĕм истори тăршшĕнче вырăс çарĕсем немĕçсене çĕмĕрнĕ, немĕç князĕсемпе баронĕсен вырăс халăхне чуралантарма хăтланнине вырăс халăхĕ сирсе тăкнă.

Немĕç баронĕсемпе князĕсем Российăна 1914-мĕш çулта империализмлă пĕремĕш вăрçăра та çавăрса илме хăтланчĕç. Патша правительстви ĕнчен вăл вăрçă çавăн пекех империалистла, халăхшăн ют пулнă пулсан та, Вильгельм Российăна пăхăнтарма тунă план путса ларнă.

Немĕç захватчикĕсем пуринчен пысăк хаярлăх пирĕн ССР Союзĕнче пынă граждан вăрçи вăхăтĕнче кăтартрĕç. Немĕçсен питех те пысăк çарĕсем империализмлă вăрçăпа халран кайнă Россия çине тапăнса, унăн чи паха районĕсене: Украинăна, Белоруссине, унтан пĕтĕм Российăна çавăрса илме ĕмĕтленнĕ.

Вырăс рабочийĕсемпе хресченĕсем, ытти советлă республикăсенчи ӗçхалăхне хăйсем тавра пĕрлештерсе, немĕç захватчикĕсене хирĕç хаяр вăрçă туса пычĕç, немĕçсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкрĕç.

Вырăс халăхĕ, славян халăхĕ пулса тăрса, этемлĕх историйĕнче чи авалхи халăх пулса тăрать. Пирĕн çĕршыв вăл — Гитлерăн киревсĕр виççĕмĕш империйĕ евĕрлĕ мар, ăнсăртран пуллă государство мар, йывăш тĕлĕшĕнчен питех те пысăк, нумай миллионлă халăх пулса, хăйĕн аллинче питех те пысăк территори тытса тăрса, вырăссем авалтанпах ĕнтĕ хăйхаллĕнлĕ наци, никама пăхăнмасăр тăракан государство пулса тăнă.

Хăйĕн государствин никама пăхăлманлăхне вырăс халăхĕ хĕвелтухăçĕнчен те, хĕвеланăçĕнчен те тапăнакан вĕçĕмсĕр нумай тăшмансене хирĕç кĕрешсе сыхласа хăварнă. Тăшман çарĕсем тапăнса килнине хирĕç кĕрешсе вырăс халăхĕ авалхи саманара та, çĕнĕ саманара та хăйĕн государствине, культурине тунă, тăшмансене хирĕç хастарлăн çапăçма хăйĕн вăйхалне çирĕплетнĕ.

Вырăс халăхĕ чи чаплă çĕнтерӳсем тума пултарнине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса пачĕ. Вăл тĕнчери пĕтĕм халăхсенчен чи пирвай этемлĕхĕн чăн-чăн ирĕклĕхне кĕрешсе илчĕ, вăл чăн-чăн демократиллĕ государство туса хучĕ.

Халĕ киревсĕр вăрă-хурахсен шайкки, фашистла тискер варварсен ушкăнĕ вырăс халăхне тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсене чуралантарма шут тытрĕ. Гитлерла Германин сĕмсĕрлĕхĕ, хаярлăхĕ, ултавлăхĕ çавтери пысăк. Анчах Гитлерпа унăн ирсĕр ушкăнĕпе пире нихăçан та сĕтеретес çук!

ССР Союзне чуралантарас тесе Гитлер кĕртсе янă фашистла тискер çарсем пуçĕпех арканса кайĕç, Гитлер режимĕ арканса кайĕ.

Совет халăхĕ хăйĕн çĕрне, хăйĕн культурине, хăйĕн завочĕсемпе çĕрĕсене сыхлать. Совет халăхĕ хăйĕн тăван совет влаçне хӳтĕлет.

Совет çĕршывĕ вăл — Европăри пек сапаланнă уйрăм çĕршывсем маррине тăшмансем шута илмеççĕ, çавăнпа та вĕсем йăнăшаççĕ. Совет государстăин, совет халăхĕн хаяр вăрă-хурахсене тĕпĕпех çĕмĕрсе тăкма кирлисем пурте пур.

Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче çапла каларĕ: «Пирĕн вăйсем çавтери нумай. Мăнкăмăлланса кайнă тăшман ăна часах курса ĕненĕ. Пирĕн çине тапăннă тăшмана хирĕç вăрçма Хĕрлĕ Çарпа пĕрле нумай пиншер рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем çĕкленеççĕ».

Фашистла çăткăнсем совет çĕрĕсене, фабрикисене, завочĕсене тата пĕтĕм халăх пурлăхне нихăçан та туртса илме пултараймĕç!

Фашистла ирсĕрсем вырăс халăхне нимĕçлетеймĕç тата Совет Союзĕнчи халăхсене нихăçан та чура тăваймĕç.

Тăшмана çĕмĕрсе тăкмашкăн совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăйне, хăйĕн пĕтĕм хăватне пухĕ. Ылханлă та киревсĕр Гитлера унăн пĕтĕм ирсĕр ушкăнĕпе пĕрле пĕтерсе хурăпăр!

П. ЮДИН.

Совет законĕсене пăхăнса ӗçлес пулать

Пирĕн çĕршыври рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенцийĕ хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ӗçлесе фашизма çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пулăшса пыраççĕ.

Аслă Сталин чĕнĕвне ответлесе совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçне вăрçă интересĕсене пăхăнтарса туса пырать. Анчах, çав вăхăтрах, ӗç дисциплинине пăсакан уйрăм çынсем тĕл пулкалаççĕ. Пирĕн вĕсене хирĕç, вăл камне-мĕне пăхса тăмасăр, вăйлăн кĕрешсе пымалла, вăрçă вăхăтĕнчи закон тăрăх айăпласа ответ тыттармалла. Ӗç тата государство дисциплинине пăсакансемшĕн нимĕнле хĕрхенӳ те пулмалла мар.

Государство, кооперати тата обществăллă организацисен аппарачĕсенчи работниксем сыхăлăхлă, çирĕп дисциплинăллă пулмалла тата ӗç вăхăчĕпе туллин усă курмалла. Ӗç вăхăтĕнче ларусем туса вăхăта усăсăр ирттернисем пулмалла мар.

Апла пулсан та, профсоюзсен хăйпĕр руководителĕсем çакна пăхăнмаççĕ. Кăçалхи июлĕн 31-мĕшĕнче вăрман ӗçĕнчи тата сулă ĕхтаракан рабочисен профсоюзĕн обкомĕ (председателĕ Андреев юлташ) ӗç вăхăтĕнчех лару тунă, унта районсенчи работниксене чылайĕшне чĕнсе илнĕ. Кунсăр пуçне профсоюз обкомĕн аппаратĕнчи работниксем те кунĕпех йĕркеллĕн ӗçлемен, вĕсем те ларура пулнă, пиллĕк çын 40 сехет хушши ӗç вăхăтне усăсăр ирттернĕ.

Совет законне пăсма Андреева никам та ирĕк паман. Профсоюзсен çуртĕнчи пуçламĕш парторганизаци Андреев юлташ пирки тивĕçлĕ мера йышăнма тивĕç.

Тăван çĕршывăн хăрушă самантра совет законĕсене пăхăнма килĕшмен çынсем пулмалла мар. Совет аппаратĕнче çавнашкал çынсем тĕл пулсан, вĕсене çийĕнчех çирĕп ответ тыттармалла.

А. С.

Ача яслисем

ÇЕРПУ. Хĕрарăмсене пурнăçне ӗçе яваçтарас çĕрте колхозсенче ача яслисемпе площадкăсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çакна шута илсе пирĕн районра ыраш вырма тухас умĕн колхозсем 365 ача вырнаçмалăх яслĕсем организацилерĕç. Вĕсенче опытлă, ятларласа курсран вĕренсе тухнă сестрасем ӗçлеççĕ.

Рындино ялсоветĕнчи «Новая жизнь» колхозăн яслинче 38 ача. Унта Никитина юлташ ӗçлет. Вăл тăрăшнипе яслĕре кашни ача валли уйăм кровать, вылямалли япаласем, савăт-сапăсем хатĕрленĕ. Яслĕ уйăм суртра. Апат-çимĕçсем те çитолĕклĕ.

Çавăн пекех, «Красная Повария», «Красный бригадир», «1905 год», «Пионер», «Ильич» т. ыт. колхозсенче те яслĕсем аван ӗçлеççĕ.

М. АНДРЕЕВА.

Кĕске сроклă курс

ÇЕМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Район центрĕнчи çамрăк учительсене методикăллă пулăшу пирас тĕллĕпне курс ӗçлеме пуçларĕ. Курсра 15 учитель вĕренет. Вĕренӳ программи 56 сехетлĕ, ăна 8 кун хушшинче вĕренсе тухмалла.

Колхоз силос нумай хатĕрлет

ПАРАЧКАВ. «Факел» колхоз кăçал çаран ути нумай çулса кĕчĕ. Уйхирте вăйла тырпул çитĕннĕ. Кăçал выльăхчĕрлĕх валли апат ытлăн-çитлĕнех пухăнать.

Колхоз силос та нумай хатĕрлесе хăварать. Кунта силос выльăх продуктивлăхне ӳстерес çĕрте пăлла вырăн йышăнса тăнине аван пĕлеççĕ. Кăçал колхозăн план тăрăх 200 тонна силос хывмалла. Вăл шутран июль уйăхĕнче 100 тонна хывса хăвармалла пулнă. Августăн 1-мĕш тĕлне çакна пĕтĕмпех пурнăçланă. Вĕсем силос хывмалли плана пĕтĕмпех ирхи срокра пурнăçлама пуçăннă.

Силос хывас ĕçре колхозри зоотехник Няшина юлташ хытă тăрăшать.

«Факел» колхоз форминче сăвакан ĕнесем 66. Сĕт суса илмелли çулталăк планне августăн 1-мĕш тĕлнех тултарнă. Государствăна сĕт парас плана та пĕтĕмпех пурнăçа кĕртнĕ.

Агроном **Т. НИКИТИН.**

КĔСКЕН

▲ ÇĔНĔ-ПАВАРИ (Елчĕк р.) «Сатурн» колхоз членĕсем А. Ксенофонтов, В. Ефремов тата А. Захаров мобилизаци йĕркипе Хĕрлĕ Çара кайнă. Вĕсен семьисем пособи илсе тăраççĕ.

▲ ШУРЧАКАССИ (Шупашкар р.) çамрăкĕсем 400 килограма яхăн тимĕртăмăр пухса панă, халь тата 200 килограмм пухнă, ăна та çак кунсенчех леçсе параççĕ.

▲ ИЕПРЕÇ çыхăну конторинчи 8 комсомолец телеграф ĕçне вĕренеççĕ. Харасева, Шашкин, Еремеев комсомолецсем ку ĕçе вĕренсе çитнĕ те ĕнтĕ, вĕсем телеграфист ятне илнĕ.

Ĕççыннисем вăрçă ĕçне вĕренеççĕ

Сывлăштран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентесси çинчен ССРР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тухнăранпа районра пиншер çын ПВХО ĕçне вĕренчĕç. Халь районĕпе самозащита групписем организациленĕ, вĕсен ĕçне йĕркеленĕ. Уйрăмăпах, Первомайски, Йĕкĕрвар, Юлаш ялсовечĕсенчи тата селекцине зоотехнически станцисенчи самозащита групписем аван ĕçлеççĕ. Ку группăсенче звено командирĕсем черетпе дежурство тăраççĕ. Звено членĕсем те хăйсен обязанноçĕсене аван пĕлеççĕ. Кашни член хăйĕн вырăнĕшĕн ответлĕ. Звеносенче кун сиктерсе практикăллă занятисем ирттереççĕ.

Осоавиахим райсоветĕ ПВХО инструкторĕсене тата самозащита групписен начальникĕсене хатĕрлеме ятларласа курссем организацилерĕ, унта 65 çын вĕренет.

ПВХО нормисене вĕрентме 16 çултан пуçласа 60 çула çитнисене пурне те явăçтарнă. Занятисем пур çĕрте те йĕркеллĕ иртеççĕ. Йĕкĕрвар, Чурачăк тата Пĕрремĕш-Вăрманкасси ялсоветĕсенче ĕççыннисем пурте ПВХО нормине вĕренсе пĕтерчĕç.

Районра 35 çынран санитарнăй дружина организацинĕ. Дружина членĕсем теорине вĕренсе пĕтерсе практикăллă ĕçе тытăнчĕç. Санитарнăй дружинăсене ертсе пыракан кадрсене хатĕрлес тĕллĕпне çак кунсенче курс уçăлать. Унта 35 çын вĕренмелле.

Районри финанс отделĕнче, типографинче т. ыт. учрежденисенче ĕçлекенсем «Ворошиловский стрелокăн» 1-мĕш сыпăклă значокĕн нормисене пачĕç.

Фронта пулăшас майпа ĕççыннисем воскресниксем тăваççĕ, оборона фондне хăйсен ĕçукçисене хываççĕ. Ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар валли мĕн кирлине йăлтах туса пама тăрăшаççĕ. Çак кунсенче 19 организацинче ĕççыннисен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Вăл пухусенче пĕр саслă пулса оборона фончĕ валли кашни уйăхра 1—2 кунхи ĕç укçине пама йышăнчĕç. Оборона фончĕ валли 175 пин тенкĕ укçа пухса государство банкне хывнă та ĕнтĕ.

Ачасен городокĕнче ĕçлекен хĕрарăмсем аманнă красноармеецсене сыватма хăйсен юнĕсене пама донорсен ретне тăма пулчĕç.

В. ФАДЕЕВ.

ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

Совет Союзёпе пёр шухăшлă пулнине кăтартакан движени

ВАШИНГТОН, августăн 9-мёш. Совет Союзён США-ри посольствине США-ри, Канадăри, Латинла Америкăри массăллă организацисенчен, паллă деятельсенчен телеграммăсемпе сыруем халё те питё нумай пыраççё, вёсем çав сырусемпе телеграммăсенче Совет Союзне хăйсем пулăшни çинчен пёлтереççё, Хёрлё Çар çёнтерессине шанса тăни çинчен каласçё. Хорватсен США-ри центральнăй комитечё резолюци ярса панă, çав резолюци Совет Союзёпе Англине хăвăртрах тата чи пысăк пулăшу пама ыйтать, Гитлерпа Муссолинин фашистла ордисем оккупациленё Югославине ирёке кăларассишён пыракан кёрешӳре США-ра пурăнакан мёнпур хорватсене, сербсене, словенсене пёрлешме чёнет. Америкăра пурăнакан сербсен VI конгресён делегачёсем Сталин юлташа памалли сыпăва ярса панă, çав сырура «пётём этемлёхён тăшманне—юнлă нацизма хирёç пыракан кёрешӳре Совет Союзне мёнпур майпа мораллё тата материаллă пулăшу пама» кăмăл тунине кăтартса панă. Конгресс делегачёсем çар госпиталёсем валли Совет Союзне яма средствăсем пухаççё.

Детройтра пурăнакан латышсен группи Совет Союзне хăй пулăшни çинчен пёлтерет.

Чикагора пурăнакан чехословаксен организацийёсем пухнă митинг чехсен легионё валли танксем илме средствăсем пухма чёнет, чехсен легионё Хёрлё Çарпа пёр пулса Германи фашизмне хирёç çапăçмалла.

Совет Союзне медицина енёпе пулăшма Аргентинăра бюро организациленё, çав бюро пёр эрне хушшинче 8 пин доллар ытла пухнă та ёнтё.

Совет посольствине Америкăри паллă врачсем халё те сырусем ярççё, вёсем Совет Союзне пулăшу сёнеççё; Хёрлё Çар ретне добровольецсем пулса кайма кăмăл тăвакансем те посольствăна сырусем ярççё.

ЛОНДОН, августăн 9-мёш. Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, пётём Палестинăра митингсем пулса иртеççё, çав митингсене Палестинăри рабочи федерацийён сулахай пайё организациленё. Митингсем Палестинăри социалистсем Совет Российёнчи ёçсынисемпе пёр шухăшлă пулнă паллăпа иртеççё.

ЛОНДОН, августăн 9-мёш. Августăн 7-мёшёнче Майский совет посольствин-че Лондон районёнчи профсоюзсен 300 пин членне пёрлештерсе тăракан тред-юнионсен Лондонри советён делегацине йышăннă. Делегаци резолюци панă, çак резолюцире Гитлерăн Совет Союзне хирёçле агрессине сивлет. Тред-юнионсен Лондонри советё, тенё резолюцире, СССР, Англи тата США хушшинче чи тачă сыхăну туса хурассишён тăрăшать тата вăрçăна ăнăçлăн вёçлес тёлёшпе вăй çитнё таран пурне те тума сăмах парать.

ЛОНДОН, августăн 10-мёш. (ТАСС). Лондонăн кăнтăр-хёвелтухăç енчи платниксен тред-юнионён отделенийё Мускаври платниксем патне сыру янă. Ятарласа пухнă пухура йышăннă сырура çапла каланă: «Сирён çёршыв çине фашистсем тапăнни çинчен эпир пётём чунтан тарăхса пёлтёмёр. Бомбăсене вăрă-хурахла килсе пăрахнине эпир хамăр çинче тӳсрёмёр. Анчах çак испытанисем пирён çуртсене çёмёрекенсене, пирён хушăра вилём саракансене çав преступленнисемшён татах та вăйлăн ответ пама пирён хăюллăха тёреклетесси патне кăна илсе пыма пултарççё. Сирён никам çёнтерейми хёпăшаллă вăйсем, çавăн пекех мёнпур совет рабочийёсем ширёншён пример пулса тăрççё. Сире кирлё мёнпур пулăшăва парса тăма тата пирён пётёмёшлё кёрешӳре активлăн хутшăнма пире никам та чараймасть. Фашизмпа кёрешекен Европăри халăхсемпе пёрле ёçлеме тата çак кёрешӳре пётём вăя хума эпир сăмах паратпăр. Сирён геройла кёрешӳре, юлташсем, сире саламлатпăр. Çёнтерӳ пирёнте пулать».

Рети Тайи промышленность районёнчи машиностроительсен союзё тата фабрикăсенчи старостăсен комитечё йышăннă резолюцире Германи фашисчёсене çёмёрекен Хёрлё Çартан тёлёнсе савăнни çинчен пёлтереççё тата Англипе Совет Союзё хушшинче тунă килёшёве саламлаççё.

Мексикăра тухса тăракан «Ля вос де Мексико» хаçат Вера Крус районёнчи рабочисен федерацийён исполнительнăй комитечё Мексика президенчё Авила Камаго патне телеграмма яни çинчен пёлтерет. Телеграммăра «пётём халăхсен интересёсене хӳтлесе фашизма хирёç пыракан кёрешёве ертсе пыракан» Совет Союзёпе дипломатиллё отношенисем тума чённё.

Хэлл заявленийё

НЬЮ-ЙОРК, августăн 9-мёш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пёлтернё тăрăх, США-н государственнăй секретарё Хэлл пичет представителёсене: Германия Хёвеланăç полушарине çёнё çёршывсене туртса илме тăрăшать, тесе каланă. «США Латинла Америкăра хёрхенӳсёр хаяр политика тытса пынине» тăрă шыв çине кăларас тёлёшпе Германия кампани иртерме шутлани çинчен Берлинран пёлтерни пирки сăмах тапратса, Хэлл çапла каланă: Берлинран çавăн пек çирёплетсе каланисем усал шухăшлă пропаганда пулса тăни пуриншён те уççăнах палла, çав пропагандăна Америкăри пёр çёршыв та ёнеpме шухăлламасть. Америкăна хирёç хатёрлекен кампани, тесе палла тунă Хэлл, Европăри 15 çёршыва пёр хёрхенӳсёр туртса илнё тата Хёвеланăç полушаринче çёнё çёршывсене туртса илессишён питех те тăрăшакан правительство представителёсенчен тухать.

Германия оккупациленё çёршывсенчи массăллă саботаж

НЬЮ-ЙОРК. Америкăри Юнайтед пресс агентстви пёлтернё тăрăх, Польшăн, Чехословакин, Югославин, Норвегин, Голландин тата Бельгин Лондонри правительствисем вёсен çёршывёсенче саботаж вăйланса пынине çирёплетсе паракан йышлă фактсем çинчен пёлтереççё. Чылай чухне, тесе сырать агентство, оккупациленё çёршывсенчи граждансене тёрлёрен ёçрен кăларса, вёсем вырăнне нимёçсене лартаççё. Çапла тунипе саботаж тукинчен хăтăлма шутлаççё. Илнё данăйсем тăрăх, промышленность продукчёсене туса кăларасси Чехословакире 30 процент, Голландире—20 процент, Норвегире—17 процент чакнă. Агентство çапла палла тăвать: патриотла хăшпёр организацисен вăрттăн ёçё тата саботаж тăвасси Германипе Совет Союзё хушшинчи вăрçă пуçлансан уйрăмах вăйланнă. (ТАСС).

Бемера арестлени

НЬЮ-ЙОРК, августăн 9-мёш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пёлтернё тăрăх, государство тёлёшпе сутăнчăклă ёç тунă тесе айăпласа, Германири пропаганда министерствин пичет отделён руководительне Бемера арестленё.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 8-мёш. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, августăн 8-мёш ыран тенё чух çёрле Германи самолечёсем Хёвелтухăç Англи çыранёсенчен пуçласа Çурçёр-Хёвелтухăç Шотландине çитиччен тёрлёрен районсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе хăшпёр сиен кӳнё. Вилнисемпе аманнисен хисепё пысăк мар. Çурçёр-Хёвелтухăç Шотландин пёр хулинчи халăх нумай пурăнакан рабочи кварталта бомбăсем пăрахнипе çынсем йышлăрах вилнё тата аманнă.

Августăн 7-мёшёнче кăнтăрла Англи бомбардировщикёсем истребительсем пулăшса пынипе Çурçёр Франци çине икё хутчен тапăннă. Сент-Омер çыпăхёнчи Германин аэродромё, противникăн суднисем тата Франципи ытти объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Англин пур бомбардировщикёсем те хăйсен базисене ăнăçлăн тавăрăннă. Англин 10 истребителё, бомбардировщиксем пулăшса пынăскерсем, каялла тавăрăнман.

Англи самолечёсем августăн 8-мёш ыран тенё чух çёрле, Эссен, Гамм тата Дортмунд хулисем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, августăн 9-мёш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пёлтернё тăрăх, августăн 9-мёш ыран тенё чух çёрле Англи бомбардировщикёсем Германин Кильри тинёс бази çине ăйлăн пырса тапăннă. Доксем çине тата çар суднисем тăвакан верфьсем çине бомбăсене тёл тата ăйлăн пăрахнă хыçăн портра калама çук пысăк пушарсем тухнă. Авиацин ытти соединенийёсем Гамбургри тата ытти районсенчи çар объекчёсем çине бомбăсем пăрахнă. Çак операцисенчен 4 самолет каялла тавăрăнман.

Çав кунах çёрле нимёçсен темиçе самолечё Хёвелтухăç Англири пёр пункт çине тата çурçёр-хёвелтухăç çыранё çине бомбăсем пăрахма пултарнă. Бомбăсем пăрахнинчен пулнă сиенсем пысăк мар. Жертвăсем пулман.

Англин авиаци министерстви çапла пёлтерет: августăн 9-мёш ыран тенё чух çёрле Англи бомбардировщикёсем Германин Кильри тинёс бази çине ăнăçлăн тапăннă. Доксене тата судостроительнăй верфьсем çине пысăк ăсталăхпа бомбăсем пăрахнă хыççăн пысăк пушарсем тухнă. Çавнашкалах Гамбургри объектсем тата ытти вырăнсем çине те тапăннă. Августăн 10-мёш ыран тенё чух çёрле противникăн самолечёсем Хёвелтухăç Англи тата Хёвелтухăç Шотландин çыранёсенчи районсен çийёнче курăннă. Темиçе самолет çёршыва шалалла кёме пултарнă. Хёвелтухăçёнче пёр-пёринчен аякра тăракан пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Пысăк сиен кӳмен, вилнисемпе аманнисен хисепё нумай мар. Çурçёр-Хёвелтухăç, Шотландин пёр пункчё çине бомбăсем пăрахнă тата хăшпёр сиен кӳнё.

Августăн 9-мёшёнче Ла-Манш тёлёнче тата Çурçёр Франципе Германин 18 самолетне персе антарнă. Англи авиацийён 10 истребителё пётнё. (ТАСС).

Инди пичечё Хёрлё Çар героизмё çинчен

КАБУЛ. Инди пичечё Германипе Совет Союзё хушшинчи вăрçа тимлён сăнаса пырать.

«Таймс ОФ Индия» хаçат вăрçă ёçёсен пёр эрнери обзорёнче çапла палăртать: Германи фашисчёсем малтан шута илмен йывăрлăхсемпе тёл пулчёç. Партизанла вăрçă, каялла кайнă чухне совет войскисем мёнпур материалсене пётерсе тăкни, совет танкёсем вăйлăн пырса çапни—çаксем пурте йывăрлăх кӳреççё, вёсем Германи командованине тарăхтараççё.

«Трибюн» хаçат хăйён пёр статьинче нимёçсем питё пысăк йывăрлăхра, тесе палăртать. Хёрлё Çар, тесе сырать хаçат, хăйён мухтавлăхне кăна мар, тата çар техникине лайăх пёлсе тăнине кăтартса пачё. Нимёçсем Франципе çакăн пек хаяр танксене, бронемашинăсене, тёлёнмелле паттăрлăха курман. Вырăссем нимёçсене пёр минутăлăха та сывлама памаççё. Нимёçсен атаки пётсенех, вырăссем контратака пуçласа ярççё. Кунсăр пуçне вырăссем партизанла вăрçă пуçарса ячёç. Нимёç войскисем пăчланаççё, вёсен тылри припасне пётерсе тăкаççё, коммуникацитатăлать. Нимёçсем çине тăрса тата çухатуçем туса пёр-пёр пункта йышăнсан, унта вёсем ишёлсе выртакан япаласемсёр пуçне урăх нимён те тупаймаççё. Дезорганизациленё, усăллă мар вырăна кёрсе ӳкнё нимёçсем вырăссене ылханаççё. Вёсем вырăссен тактикине шутланла тактика тесе калама тытăннă пулсан, нимёçсем мёнле йывăр та чухăн положенине кёрсе ӳкнине ăнланса илме йывăр мар. Хёвелтухăç фронтёнчи войскăсене пулăшас тесе нимёçсем хăйсен Ливири темиçе дивизине чёнсе илнё. Нимёçсен сывлăшри вăйёсене те пысăк çухатуçем кӳнё. Вёсене вăйлатма самолетсене хёвеланăç фронтёнчен куçарнă. Германи çарё çыхланса ӳкрё. Агрессора тавăрмалли сивё хёл çывхарса килет.

Турци официозё Германипе Совет Союзё хушшинчи вăрçăн перспективисем çинчен

АНКАРА, августăн 8-мёш. (ТАСС). Августăн 8-мёшёнче Турци официозё Германипе Совет Союзё хушшинчи вăрçăн обзорёнче çапла сырать: нимёçсен пропаганди Хёрлё Çара часах çёнтересси çинчен пёлтерни пушă сăмах пулса юлчё, нимёçсем хăйсен планёнче йăнăшрёç. Совет войскисем нимёçсем шутланă пек мар вăйлăн, çине тăрса хирёç тăраççё. Вырăссем çине тăрса хирёç тăнин секречё — Советсем нимёçсен планёсене ăнланса илни пулса тăрать. Вёсем малтанхи вăхăтра Франципи пек, паника тăвас шутпа моторизованнăй вăйёсемпе усă курма шутланă. Анчах советсем нимёçсен моторизованнăй чаçёсене вёсен пехотисенчен ăнăçлăн тата-тата илеççё.

Совет войскисем, тенё обзорта, тытăкăна парăнас вăрăнне, юлашки тумлам юн юлмичченех çапăçма кăмăл тăваççё. Смоленск енче совет войскисем юлашки патрон пётиччен çапăçса, нимёçсене çынсем енёпе те, вооружени тёлёшпе те пысăк çухатуçем кӳнё.

«Атаи» хаçатăн главнăй редакторё çапла сырать: «Германин хăйён çарне хёлёпех Российăра тытас тата вёсене япаласем Европăран парса тăрас пулсан, вара вăл нимёçсемшён инкек-синкек патне хăвăрт çитсе тăрас испытани пулса тăрать».

* * *

«Интерконтинент ньюс» корреспонденчё г-жа Жаннет Вивер Америкăри Пёрлешӳллё Штатсене Владивостокра тата Камчаткăра тинёс-çар базисем пани çинчен Готкино Мускава килнё май нимёç информаци бюровёпе Стефани агентстви пёлтерипесем пирки ыйту парсан, Лозовский юлташ çапла ответленё:

Çак фантазиллё пёлтерӳсем чăлăхпа пачах та çыхăнса тăмаççё. Эпё çакна питех те официально пёлтерме тивёç: Пёрлешӳллё Штатсем СССР умне çавăн пек ыйту нихăçан та лартман.

Тинёсри вăрçă

ЛОНДОН, августăн 9-мёш. (ТАСС). Официальнăй йёркепе çапла пёлтереççё: Англин тинёс авиацийё Вăтаçёр тинёсёнче противникăн 6 эсминецё хуралласа пыракан суту-илӳ тумалли 6 судно караванне икё хутчен ăнăçлăн атакăлана. Торпедăсемпе персе виçё парохода путарнă (вёсен пётём водоизмещенийё 22 пин тонна), 6 пин тонна водоизмещенияллё тăваттăмёш пароходне пысăккăн сиенленё. Пырса тапăннă вăхăтра каравана хӳтлесе пыракан эсминецсенчен пёри те Англи самолечёсем çине пемен, çак вăл эсминецсем сиенленнине пёлтерет.

Голландин подводнăй лодки, Англин тинёс-çар флочёпе пёрле операцисене хутшăннăскер, Вăтаçёр тинёсёнче противникăн пёр грузовой пароходне путарнă тата вспомогательнăй тепёр карапа пысăккăн сиенленё.

СТАМБУЛ, августăн 9-мёш. (ТАСС). Çапла пёлтереççё: Румынин «Албэ Юлия» тата «Балсис» парохочёсене, çавăн пекех Италин «Капо Арма» пароходне, Стамбулран Триеста кайма тухнăскерсене, Вăтаçёр тинёсёнче путарнă.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 9-мёш. Ассошиэйтед пресс агентстви пёлтернё тăрăх, Голланди Индийён владёсем Германин 12.700 тонна водоизмещенияллё «Эссен» тата «Франкен» ятлă пароходсене туртса илнё, англичансем Аден сывăхёнче Италин 8.500 тонна водоизмещенияллё «Эскилино» ятлă пароходне туртса илнё. Вёсене пурне те çёнё ят панă. Çав пароходсемпе халё союзниксем усă курççё.

Англи авиацийён Сывăх Хёвелтухăçёнчи ёçёсем

ЛОНДОН, августăн 8-мёш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пёлтерет. августăн 6-мёш ыран тенё чух çёрле Англи тата Кăнтăр Африка самолечёсем противникăн порчёсемпе аэродромёсем çине пыра-пыра тапăннă. Бенгази çине тапăннă вăхăтра йывăр бомбардировщиксем мол варрине бомбăсем пăрахнă. Дерн çине бомбăсем пăрахнине пула портра пушарсем тухнă. Дернри авторемонтнăй мастерскойсем çине те çавăн пекех бомбăсем пăрахнă. Гамбатри, Эль-Газальри аэродромсем çине те бомбăсем пăрахнă.

Мисрат çине бомбăсем пăрахса, казармăсене пысăккăн сиенленё.

Çав каçхинех Англин тинёс авиацийё Италин Августри (Сицилия) подводнăй лодкисен бази çине бомбăсем пăрахнă. Пысăк калибрлă бомбăсем тёл ӳкнине палăртнă. Нефтехранилищёре пысăк пушар тухнă. Англин пёр самолечё каялла тавăрăнман.

Çил арманё аван çапма тытăнать

ÇЕРПУ. (Хамăр корр.). Пушарпуçёнчи «Авангард» колхоз аван çапнă çёрте çил арманёпе усă курма тытăнать. Арманпа аван çапни лаша вăйёпе урăх ёçре усă курма май парать тата ёç тухăçлăхне ӳстерет.

Г. П.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ВУРНАРСКИЙ
Зооветеринарный техникум
объявляет,
что прием заявлений на I курс 1941—42 учебного года продолжается.
Приемные испытания начинаются 18 августа. Дети рядового и начальствующего состава, призванные в ряды Красной Армии и Военно-Морского флота, от платы за обучение освобождаются.
Адрес: ЧАССР, пос. Вурнары, Зооветтехникум.
Дирекция.

Чувашский Сельскохозяйственный Институт
НКЗ СССР
объявляет, что прием студентов на 1941—42 учебный год будет производиться до 1 октября 1941 года.
Отличники средних школ, техникумов и училищ, а также все окончившие среднюю школу в 1941 году, принимаются без испытаний. Остальные должны сдавать приемные испытания.
Начало занятий 1-го октября 1941 года.
Дирекция.
2—1

К СВЕДЕНИЮ
поступающих
в Алатырский учительский
ИНСТИТУТ
В связи со слиянием Алатырского Учительского Института с Чувашским Государственным Учительским Институтом все желающие поступить в Учительский Институт должны направлять заявления в адрес Чувашского Пединститута: г. Чебоксары, улица Карла Маркса, дом № 80.
Приемные испытания начинаются 15 августа. Заявления можно подавать и лично явившись на испытания.
Дирекция.
3—1

Хамăр енчен пулăшу пама пулатпăр

Америкăран килнё телеграмма

ВЦСПС Лондонран (США, Огайо штатё) çакăн пек телеграмма илнё:

«Эпир, электропоезд водителёсен Америкăри союзён вырăнти 488-мёш номерлё отделён членёсем, нацистла Германия тапăнса кёнине хирёç пыракан сирён кёрешӳре хамăр енчен пулăшу пама пулатпăр.

Биддл».

Çакна ответлесе ВЦСПС секретарё Шверник юлташ алă пуснă çакăн пек телеграммăна янă:

«Профсоюзсен Пётём Союзри Центральнăй Совечё эсир туслăн саламланăшăн тата совет халăхён юнлă агрессора — гитлерла Германине хирёç пыракан паттăрла кёрешёвёнче пире пулăшу пама пулнишён тав тăвать. Совет Союзёнчи рабочи класс, электропоездсен водителёсем, Америкăри мёнпур рабочисем пекех, этемлёхён чи хаяр тăшманне — гитлеризма çапса аркатса, пётерсе хурао ёçе активлăн хутшăнёç, тесе шанса тăрать». (ТАСС).

Англи горнякёсем ССР Союзне пулăшу организацилеççё

ЛОНДОН, августăн 10-мёш. (ТАСС). Англири сăрт-ту рабочийёсен профсоюзён Федераци исполкомё Хёрлё Çара пулăшмалли фонда пама профсоюзăн çаллăн членёнчен 2,5 шиллинг чухлё уйăха пухасси çинчен августăн 9-мёшёнче решени йышăннă. Пухнă средствăсемпе Федераци исполкомё полевой лазаретсем организацилеме, аманнисене турттарса çӳремелли санитарнăй автомобильсем тата Хёрлё Çар боецёсем валли медикаментсем т. ыт. туянма шутлать.

Ютçёршыв корреспонденчёсен черетлё пресс-конференцийёнче

Ютçёршыв корреспонденчёсен августăн 9-мёшёнче пулса иртнё черетлё пресс-конференцийёнче Совет Информацби Бюровён начальник заместителё С. А. Лозовский юлташ çапла пёлтернё:

Нимёçсем радио урлă сенсациллё пёлтерӳ парса пётём тёнчене тёлёнтерсе ячёç, ССР Союзён Парижри тата Берлинри посольствисен çурчёсенче ухтару тунă вăхăтра пуçпа ăнланма çук тёлёнтерекен япаласем тупнă, терёç. Парижра, паллах, «Коминтерн йёрёсене» тупнă, унтан тата «тимёр алăксемлё пӳлёмсем» тупнă, çав «пӳлёмсенче ГПУ бюровё пулнă», юнашарах тата нимёç сыщикёсем «электричество кăмакине тата сын виллисене касса вакламалли кювет» тупнă. Посольство çуртёнче питех те нумай сверлильнăй машинăсем, кислород аппарачёсем, пулеметсем, револьверсем, ерипен çунакан фитильсем, зарядлă темиçе ещёк, икё парашют, газ маскисем, алла тăхăнтартмалли 20 сăнчăр тата пёрлёрен ядсем тулларнă аптечкăсем т. ыт. тупнă тата, юлашкинчен, картина туллирех пултăр тесе, «асаплантармалли пӳлёмре» «сын виллисене çунтармалли пысăк пăмăка» пулнă.

Уголовнăй тата полицейски романра эпоха тăвакан çак шалтах тёлёнтерсе яракан открытипе пёр вăхăтрах, Гиммлер романиечёсем творчество тума Берлинри посольство çуртне кайнă. Унта вёсем тимёр алăксемлё пӳлём тупнă. «Çакă вăл ятарласа тунă тёрме пулмалла»,—тесе сӳпёлтереççё Гиммлер тарçисем,—кунта тата «тимёр алăксем çинче револьвертан пенё 25 пулян йёррине тупнă». Пёр пӳлёмре, — тет нимёçсен информаци бюровё, — концентрированнăй азот кислоти тултарнă ампулăсем тупнă, яд тултарнă 5 ампула, фосфор кислоти тата ытти химилё продуктсем тата «дум-дум» ятлă пулясем тупнă. Портативлă радиопередатчиксем, радиоприемниксем, кислородлă ампулăсемпе пёрле паяльнăй трубкăсем нумай тупнă тата металран тунă пит нумай пичетсем тупнă, вёсенчен пёри Чилин Бреславльри консульствин пичечё пулнă.

Германи пропагандине çакнашкал ăссăр атташусем тума мён хушать-ха? Германи пропагандин нрёксёрех ухмахлатнă нимёçсен пёчёк инстинкчёсемпе тата первисемпе усă курма тивет, мёншён тесен Гитлер тата Геббельс, Гиммлер тата Геринг кăйсен халăхне чăнлăха калама пултараймаççё, мёншён тесен чăнлăха каланă вăл — хăйсене кăйсем вёлернине пёлтерет, вăл—характерине пёлтерет. Вёсен, пёр суя çине теприне купаласа, уголовнăй тата полицейски романсенчен иланё хăрушлăхсене ытларах хушса, ир пуçласа кăçчен суймалла, мёншён тесен вёсем çапла майпа çеç хăйсем тăвакан тёлёнмелле тискер преступленнисен йёрёсене шăлса лартма ёмётленеççё. «Пин те пёр суя» текен серири çак юмахсем çавăнтан килеççё ёнтё, уголовнăй ёçсем тёлёнпе ёçлекен питлерла специалистсен детективлă романёсем çавăнтан килеççё ёнтё.

Çакăнпа пёрлех тата тепёр ыйту тухса тăрать: Гитлерсемпе Гиммлерсем, пётём тёнчери правăн мёнпур нормисене пăсса, хăйсен охраннăй отрячёсен лапăрчăк аллисемпе совет çурчёсене варалама мёнле хăйнă-ха? Çакăн пирки калама вёсен хăйсен сăмах пур. Мускавра Германи посольствине ухтарнă мён, çавăнпа та нимёç правительстви Берлинри тата Парижри посольствăсен çурчёсене ухтарчё, теççё. Анчах та Мускавра Германи миссийён çуртёнче нимёнле ухтарусем те пулман. Германи правительстви Мускавра чылай çуртсене тара илнё. Берлинри тата Парижри çуртсем совет государствин çурчёсем пулса тăраççё, çавăнпа та Советăн Берлинри тата Парижри посольство çурчёсене полици ордисем ирсёррён тапăнса кёнине нимёнле те тӳрре кăларма çук. Германи правительстви посольство çуртне пăхма Швецин Берлинри посольствине — ССР Союзён Германири интересёсене хӳтлекен посольствăна чёнме хăранă. Çавăн пек чёнме кирлё пулнă — çак вăл пётём тёнчери право енчен илсе пăхсан элементарнăй япала пулса тăрать. Анчах та Гитлер çур çёрте те хăйён законёсене — полици чыпкин, намăса пёлмесёр суйнин тата Германи халăхёпе ытти халăхсенчен ирсёррён мăшкăланин законёсене туса хурасшăн. Эпир пётём тёнчери право ыйтăвёсем тăрăх Гитлерпа тата унăн шайккине тавлашма хатёрленместпёр. Пётём тёнчери право çинчен Гитлерпа тавлашни — шатра ерессен телеграф юпине привизка тунă пекех нимёнле усă та памăс çук.

Юлашки вăхăтра Болгарири хаçатсен чылай пысăк пайё хăйсен Берлинри хуçисем саракан мёнпур суя сӳпёлтетёве тепёр хут калать çеç те мар, тата лакей пек тăрăшса Берлинри фельтфебелён аттисене çуллать тата Совет Союзё пирки ирсёр элексем нумай сарать.

Болгарири «Зора», «Утро», «Днес», «Слово» тата ытти хаçатсем те «совет фрончё арканса кайни» çинчен кунсеренех сыраççё, совет летчикёсене тăлăп тăхăннă тата така тирёнчен çёлёк тăхăннă халсăр стариксем пек туса кăтартаççё, «Кремльри çёр айёнчи» темёнле вăрттăн канашлусем çинчен сӳпёлтетеççё. Çак хаçат мародерёсем вилнё тата тытăкăна лекнё большевиксене миллиона шутласа çитернё, вёсем Буденный çарне хупăрласа илни çинчен, Мускава ишёлтерсе пётерни çинчен, Мускава çитме çул уçă пулни çинчен, Германия пётём этемлёхшён кёрешни çинчен тёп-тёрёс пёлсе тăраççё, çакăнпа çак йытăсем, паллах, Гитлера тав тăваççё.

Болгарири çак хаçатсем, ирсёр тарçă ёçне туса, ССР Союзё «Германи çине тапăннă», СССР «Балкан çине тапăнасшăн пулнă», большевиксем хирёç тăни «пуршёр ахалех пулать», «нимёçсемпе румынсем хăйсен пултарулли тата витёмлё ёçёпе Хёрлё Çара Çурçёр Добруджа çине поход тума шамарёç», «совет войскисене Çёпёрелле илсе кайнă ёнтё» т. ыт. тесе те сыраççё. Журнализмри çак вёт-шакăр жуликсен ирсёр элекён, вăтанмасăр суйнин вёçё те курăнмасть. Вёсене Германин Софири миссийё питех те йӳнё пакпа (пёр маркки 33 лава чухлё тăрать!) сутăн илнё. Вёсен задачи — Геббельс элекне çёршер хут ӳстерсе кăтартасси. Çак тара кёрёшнё çынсен творчествин рецепчё çăмăл: Геббельсăн чирлё фантазийё туса хатёрленё заменительсем шутёнчи ырхан кăвакала илеççё; çăмăл махинăвисем пулăшнипе çак эрзац-кăвакалран слон туса хураççё, кун хыççăн вара, Геббельспа пёрле, юлан шăммипе суту-илӳ тăваççё. Прусси фельдфебелёсен Болгари литературинчи тарçисен пётём секречё те çакăнта кăна.

Лозовский юлташ Англири икё пысăк хаçат «Ньюс-хроникл» тата «Дейли экспресс» усăллă мар сенсаци тăвас çулпа кайнине шеллесе палла тăвать, вёсем Британи юнайтед пресс агентстви Шанхайри корреспонденчён пёлтерӳне пичетлесе кăларнă, çав пёлтерӳ тăрăх Япония ССР Союзне çакăн пек требованисем тăратнă иккен: Владивостока демилитаризаци тăвасси, Совет Союзёпе Манчжури хушшинчи чикёре демилитаризацилене зонăсем тăвасси, Японие Çёпёрте экономикăллă концессисем парасси, Америкăна нимёнле стратегиллё базăсем те памасăр тăма пулса Совет Союзё обязательство илесси.

Çак сенсациллё пёлтерӳ чăлăхпа нимён чухлё те çыхăнса тăмасть. Британи юнайтед пресс агентстви Шанхайри корреспонденчён çак тёлёкё çине пысăк хаçатсемех ытла та çăмăллăн пăхнинчен тёлёнесси кăна юлать.

* * *

Редакци адресё: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. Телефонсем: редакторăн — 0—67, редактор заместителён — 3—97, редакци секретарён — 4—40, пропаганда пайён — 4—97, парти пурнăç пайён — 7—97, ялхуçалăхёпе промышленность пайёсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайён — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин сулёпе» журналён — 0—85, издательство конторин—0—23.

ЧТ 5524.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии 2 _ 84 п. л.